27-92 38

ОÇИППĂВ.

# КУШАР

## IV ПАЙЛĂ, 5 КАРТТИНЛĂ ТРАМĂ

ÇĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР 1927 ÇУЛ

П. Н. Оҫиппӑв.

# КУШАР

IV ПАЙЛӐ, 5 КАРТТИНЛӐ ТРАМӐ

ЂӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
Шупашкар 1927

Чебоксары, типография
„Чувашская Книга“

Чувашлит № 1683. Напеч. 2.000 экземп.

# УМĔНХИ СĂМАХ.

Çак «Кушар» йатлă трамăна епĕ «Икĕ каӟӟăн пĕр шухăш» хыççăнах çырнă. Малтанхи пйессăра та, ку трамăра та патша вăрçи вăхăтĕнӟи ĕçсем çинӟен çырнă.

Кушар тесе хĕр пасарне калаççĕ. Вăл пасар Шупашкар уйесĕнӟе Ӟĕнкасси йалăн улăхĕнӟе, шыв хĕрĕнӟе пулат.

Кашни çул çамрак хĕрсем, каӟӟăсем, тата пĕӟĕк аӟасем, Тройтсă кунĕ пухăнса, çав улăхра уйав тăваççĕ. Уйава çамрăксен йармăркки теме те йурат. Мĕншĕн тесессĕн, йармăрккăри пекех, кăруççелсем те пулаççĕ, пĕремĕк-кăнихветсемпе, тĕрлĕ квассемпе, пылак-шывсемпе сут тăвакансем те, телей турттаракансем те (йăлттарилле выӆакансем) т. ыт. те. Анӟах пурте çамрăксене йурамалли йапаласем çех. Ваттисем Кушарта çукпа пĕрех.

Пуринӟен ытла Кушара Каӟӟăсем хĕр пăхма пуçтарăнаççĕ. Çавăнпа каӟӟисем те, хĕрĕсем те, лайăхрах йусанса тухма тăрăшаççĕ. Хĕрпе каӟӟă паллашасси, хĕр вăрласси, йе ашшĕпе амăшĕнӟен вăрттăн йуратакан каӟӟа тухса кайасси—çав Кушарта ӟас-ӟасах пулат.

Манăн трамăри ĕç те çав Кушартан тапранса кайат. Çавăнпа пйессăна та епĕ „Кушар“ тесе йат патăм.

Авттăр.

## Пйессӑри ҫынсем:

1. **Лисук**—ђипер хӗр.
2. **Кӑвак Ентрей**—унӑн ашшӗ, пуйанскер.
3. **Лисук амӑшӗ**—усал карђӑк.
4. **Инкӗшӗ**—ђейескер.
5. **Ерхип**—ҫамрӑк усал, пуйан.
6. **Тикка**—унӑн ашшӗ, мухтанма йуратаканскер.
7. **Ерхип амӑшӗ**—авалхи йӗркене хисеплекен хӗрарӑм.
8. **Мурсай**—Ерхипӗн тарҫӑ йевӗрлӗ йулташӗ.
9. **Ваҫҫа пиђђе**—туй ҫынни, ватӑскер.
10. **Пуста кађђи**—ташша пӗлекен хастар ҫӑмӑл ађа.
11. **Ваљкка**—ҫамрӑк тӳлек ађа.
12. **Хветук**—унӑн ашшӗ, хисеплӗ ҫын.
13. **Амӑшӗ**—ђахуткӑпа асапланаканскер.
14. **Микула**—вӗсен пӗђӗк ађи.
15. **Арттеми**—Ваљкка йулташӗ.
16. **Михаља**—салтак ађи, купӑсҫӑ.
17. **Марйе**—ҫамрӑк хӗр.
18. **1-мӗш кӳршӗ** } —ӗҫкӗ ҫыннисем.
19. **Пӗр хӗрарӑм** }
20. **Маркки пиђђе**—ут кӗтӳҫӗ.
21. **Мирун**—кулӑшларах ађа.
22. **Трапхин**—йалти хусах.
23. **Кҫењук**—вӑййа тухнӑ хӗр.

*Салтак аљисем, туй халӑхӗ, Кушара пухӑннӑ аљасем, вӑййа тухнӑ хӗрсем, выртмари аљасем.*

## 1-мĕш пайĕ.

*Айакра йал курăнать. Йал умĕнтҫе шыв йухать. Йал тавра вăрман. Шыв хĕрĕнтҫе ик айаккипе лавккасем; ҫамрăк атҙасем, хĕрсем пухăннă. Пурте йусанса тухнă. Хыҫалта кăруҫҫел ҫĕмĕрлет, атҙапăтҙасем кĕшĕлтетсе курма тҙупаҫҫĕ. Пĕтҙĕк атҙасем пылак шыв, перус, хĕвелҫарнăш сутса, кăшкăрса ҫӳреҫҫĕ. Купăс сасси, йурлани унтан-кунтан илтĕнет.*

### 1-мĕш курăнни.

*Ерхипе унăн йулташĕсем ертелтен уйăрăлса йулаҫҫĕ.*

Ерхип. Ну, пирĕн хĕре лайăх сыхлас пулать, тартма йурамасть.

Мурсай. Ăна епĕр есĕ каламасăр та пĕлетпĕр, есĕ ђасрах лешне... (*ĕҫессине систерет*).

Ерхип (*пĕр пулшитав ерех кăларса парать, курăк ҫине кайса выртаҫҫĕ*).

Пĕри. Сан туртмалли ҫуки?

Ерхип. Пур (*кăларса парать*).

Мурсай. Есĕр туртăр, ман туртас килмест (*карланкинтҙен ĕҫет*).

Пĕри (*перусне ывăтса*). Ай-ай, вăл пĕђђенех ĕҫсе йарать. (*Пĕр-пĕринтҙен туртса илсе тҙерккесĕрех ĕҫеҫҫĕ. Ерхип ĕҫмест*).

Мурсай. Хăй ваҙђи хăварăр.

Е р х и п. Мана кирлĕ мар, ĕçĕр. (*Виç-тăват хĕр иртсе кайаççĕ, вĕсемпе Лисук та пур.*)

М у р с а й. Çавăрăнса пăхха!

### 2-мĕш курăнни.

*Лисукпа унăн йулташĕсем кĕреççĕ.*

Е р х и п (*курать те, тӳрех хĕр патне пырать*). Ха йепле вĕсем йусанса тухнă. Сывăи хĕрсем! (*Пурте пыраççĕ*).

П ĕ р х ĕ р. Маттур çак есĕ ытла та, Ерхип!

М у р с а й. Епĕ те маттурçке çак. Есĕр мана çын вырăнне те хумастăра?

П ĕ р х ĕ р. Кай! Санран ерех шăрши килет. (*Хĕрсемпе катъгъăсем тĕрткелешсе кайаççĕ. Ерхиппе Лисук йулаççĕ*).

М у р с а й. Ерех шăрши? Епĕ ерех ĕçме мар, тутине те пĕлместĕп. Ха, ха, ха!

Е р х и п. Лисук, ман санпа калаçмалли пур.

Л и с у к. Мĕн тата?

Е р х и п. Есĕ кађђа кайма хатĕрленет темеççĕи?

Л и с у к. Кам калать сана?

Е р х и п. Илтнĕ епĕ. Кутемере кайать, теççĕ.

Л и с у к. Кайсан, сана мĕн ĕç?

Е р х и п (*çиленсе*). Лисук!

Л и с у к. Ах, тур, çиленсе карĕ.

Е р х и п. Епĕ сана: кайаймастăн, тетĕп.

Л и с у к. Мĕн ес ман çума çыпăçрăн (*кайма тăрать*).

Е р х и п (*йамасть*). Тăр! Аçусем памаççĕ сана.

Л и с у к. Памасан, сан телей (*кайма тăрать*). Йар, çынсем кураççĕ.

Е р х и п. Йамастăп. Йенђен Кутемере кайсассăн... (*пăшалне кăтартат*).

Л и с у к. Асту, мĕнпе хăратат̆. Кутемере каймасан та, епĕ сана пырас çук.

Е р х и п. Мĕ-ĕн?

Л и с у к. Йар! Йамастăна? Йамасан, çухратăп!

Е р х и п. Ĕ-ĕ! (*тĕртсе йарàт̆*). Йурĕ, астăвăн. (*Хăй тĕллĕн*). Кăтартăпха епĕ сана! Ахалех иртмĕ. Венђет тусан та, пурăнма памăп. (*Шăхрàт̆, йултàшĕсем пуçтарăнаççĕ*).

## 3-мĕш курăнни.

М у р с а й. Мĕн, хĕрпе ĕç тухмаст̆и?

Е р х и п. Тухмасан та кăларăпăр. (*Хăй тĕллĕн*). Хĕре вăрлама ђарасах пулат̆. Вĕçертсен, таврасси хĕн. (*Йултàшĕсене*). Епĕр, Мурсай, санпа кунта çӳрер, есĕр çын пуçтарса кĕпер патне кайăр.

М у р с а й. Тытсассăн ĕнтĕ!.. Шаккаттăмăр лайăх (*пӳрнепе мăйĕнтђен шàккасà кăтартат̆*).

Е р х и п. Ат̆ăр, саланар... Лайăх астăвăр! (*Саланаççĕ*).

*Стђенă вàррине тухса, атђăпăтђàсем телей турт̆аççĕ (йăлттарилле выђàççĕ), хыçалта кăруççел çĕмĕрлет*).

## 4-мĕш курăнни.

*Вађкапа Мàрйе кĕреççĕ.*

В а ђ к к а. Петĕр лашана йал хыçне тăратрĕ. Сан, Марйе, йепле те пулсан, хĕре, лешсенђен вăрттăн, унта илсе кайас пулат̆.

Марйе. Халехи?

Ваљкка. Халех, анђах мĕнле сисиђђен тартасха? (*Арттеми кĕрет*).

Арттеми (*йĕри-тавра пăхкаласа*). Çук, ађа, пирĕн ĕç тухмасť.

Ваљкка. Мĕнле апла?

Арттеми. Ерхип таçтан сиснĕ те, кĕпер патне тăват ађа тăратнă. Хăй Кушара пăшалпах килнĕ, теççĕ.

Марйе. Ђăнахи?

Арттеми. Ђăн пулмалла. Епĕ ăна хам та куртăм. Йулташĕсемпе пуçтараннă та, тем çинђен вăрттăн калаçаççĕ. Хĕре куçран çĕтермеççĕ. Ах хитре те çав Лисук! Пурçăн тутăрпа, пасар кĕпипе...

Ваљкка. Ђимха ун çинђен калаçасси тарам. Мĕн тумалла пирĕн? (*Хыçалта Мурсай пытанса тăнласа тăрат*).

Арттеми. Есĕ лашана ăçта тăратнă?

Ваљкка. Лаша Ђенкассинђе кĕтсе тăраť.

Арттеми. Лаша патĕнђе кам?

Ваљкка. Петĕр. Кĕтсе ывăнђĕ пулĕ ĕнтĕ. Епĕ Марйепе Лисука ăсатас та, хам кунтах йулаç, тетĕп.

Арттеми. Ђимха. Акă мĕнле тăватпăр: есĕ, Марйе, хĕр патне кай, сана никам та палламасť. Пăртак çӳрекелĕр те, ертелтен уйăрăлса çырма тăрăх Кушмара кĕперĕ патне утăр. Кунти кĕпер патне ан кайăр: унта сыхлаççĕ.

Марйе. Йурĕ.

Арттеми (*Вађкана*). Есĕ ниçта та ан кай (*Мурсай сиксе тухаť*).

### 5-мӗш куранни.

*Мурсай, вара Ерхиппе йулташӗсем. Марйепе Ваҫкка тараҫҫӗ.*

Мурсай (*шăхăрать, Арттемийе йарса илет*). Ҫу-ук, тараймастăн, лекрӗн. Ей! (*Ерхиппе йулташӗсем ҫупса пыраҫҫӗ*).

Ерхип. Лекрӗҫи?

Мурсай. Пӗри лекрӗ, лешсем тарҫӗҫ. Ҫупăр вӗсем хыҫӗнҫен.

Ерхип. Ăҫталла тарҫӗҫ?

Мурсай. Ав унталла! Ҫасрах (*Ерхип йулташӗсемпе хăвалама ҫупать*).

Арттеми. Йаратăна, есӗ йамастăна?

Мурсай (*шăхăрать*). Ей!

Арттеми. А-а! Есӗ аплаи? (*Ӗнсерен парса, йăвантарса йарать, хăй тепӗр йеннелле тарать*).

Мурсай (*шăхăрать, ҫупса килеҫҫӗ*).

Ерхип. Ма тартрăн?

Мурсай. Тарҫӗ шуйттан!...

Ерхип (*каласа пӗтериҫҫенех*). Ех, кӗсел!

Мурсай. Кӗсел! Ху пулсан та ҫараймастăн, вăйлă шуйттан!

Ерхип. Кӗсел пулмасăр! Ăҫталла тарҫӗ вăл?

Мурсай. Шуйттан хăваласа ҫиттӗри ăна, таҫта тарҫӗ. Ӗнсерен паҫӗ те, кусран симӗсӗн—кăвакăн ҫеҫ курăнса карӗ.

Ерхип. Тфу! Ни лешсене тытаймарăмăр, ни...

Мурсай. Тăрха! (*сиксе тăрать*).

Ерхип. Ну!

Мурсай. Халех пурне те тытатпăр.

Ерхип. Мĕнле?

Мурсай. Пирĕн кĕпер патĕнђисене систерес пулаť: унта сыхлани те ахалех.

Ерхип. Мĕнле апла?

Мурсай. Вĕсем Кушмара кĕперĕпе тарма канаш турĕç. Çавăнтанах тараççĕ пулмалла, лаши Ђĕнкассинђе кĕтет.

Ерхип. Апла пулсан пирĕн икĕ пайа уйăрăлас. Есĕр Кушмара кĕперĕ патне ђупăр, епĕ кунти кĕпер патĕнђи йулташсемпе Ђĕнкассине ђупам.

Мурсай *(кайнă тђух)*. Тарђĕç пуљ шуйттансем, çитейместпĕр.

Ерхип. Мĕн пулаť унта. (*Уйăрăлса кайаççĕ*).

## 6-мĕш курăнни.

*Атђапăтђасем шыва кĕме тђупаççĕ.*

Пĕр ађи. Микула Трайхин, аťăр шыва кĕме кам пыраť!

Пĕри. Кам телей туртас тет, пĕр пус, пĕр пус! (*Ваљкка Марйе сылтăм йентђен кĕреççĕ, вара Арттеми кĕрет*).

Ваљкка. Ну капла пулђĕха, пытанса йултăмăр, кураймарĕç, малалла мĕн тăвас. Арттеми ăçта карĕши?

Марйе. Арттемийе тытса йулсан манăн сехĕр хăпсах тухнăђђĕ.

Ваљкка. Арттемийе вĕсем виççĕн ђараймаççĕ: пĕрре парсан, йăвантарса йараť! (*Арттеми кĕрет*).

Арттеми. Ха-ха-ха! Лартрăмăр ђике тăршшĕ! Сирĕнтен пулати пире тытасси? Ех, кĕсел аврисем!

Ваљкка. Есĕ мĕнле хăтăлтăн тата?

Арттеми. Мĕн мĕнли... Епĕ ниçта та кайман, пытантăм та йултăм. Ах, ђупаççĕçке! Пашка-пашка, йĕп-йĕпе тара ўкнĕ. Хăшĕ-хăшĕ çул çинђе кĕсйисене ђул пуçтараççĕ... Ех, çăм кайĕкĕсем! (*Ваљккапа Марйе кулаççĕ*).

Марйе. Ай-ай, ађа есĕ питĕ маттур!

Арттеми. Пайан çеç марçке, куркаланă. Анђах ахаљ тăрас мар. Лешсем çук ђухне тарас. Есĕ (*Марйене*) хĕре ђĕнсе килха. Хаљ унта çук, пурте хăвалама кайнă. (*Марйе кайат̆*).

Ваљкка. Петĕр мĕн тăват̆ши пирĕн?

Арттеми. Мĕн тăват̆, кĕтет. Ерхип йулташĕсемпе Ђĕнкассине ђупрĕ.

Ваљкка. Вăл Петĕре паллат̆и?

Арттеми. Çук, палламаст̆.

Ваљкка. Апла пулсан пырат̆.

Арттеми. Ах, лаша çукха тарма. Çуран утма лекет.

### 7-мĕш курăнни.

*Çавсемех тата Петĕр.*

Петĕр. Кĕт-кĕт сире... (*Ваљккапа Арттеми калаçса пĕтеритђенех кулса йараççĕ*). Мĕн ахăлтататăр есĕр? (*Хăй те кулат̆*).

Арттеми. Есĕ ăçтан аса илтĕн кунта килме?

Петĕр. Мĕн ман касђен кĕтмеллеи! Хаљ те иртенпе кĕтепĕп.

Арттеми. Лаша ăçта сан?

Петĕр. Кунта.

Арттеми. Кунта? Ха-ха-ха! Ну, Вађкка, ларса каймалли анђах йулђĕ. Кĕпер патĕнђе никам та çук, вĕçтер!

Петĕр. Мĕн, ĕç тухаĭи вара?

Арттеми. Тухнă ĕнтĕ... Хĕр килессе анђах кĕтетпĕр, Марйе карĕ ђĕнме.

Петĕр. Лешсем ăçта?

Арттеми. Пире хăвалама ђупрĕç, епĕр кунта пытанса йултăмăр. Есĕ тĕл мулмарăна вара вĕсене?

Петĕр. Тин пĕлтĕм... Хаљ мана хирĕç пиллĕкĕн карĕç. Пĕри аллисемпе сулласа калаçса пыраĭ. Пурте йĕп-йĕпе тара ўкнĕ, картуссисене хунă, тусан витĕр куçĕсем аран палăраççĕ... Вĕсем пулнă мĕн.

Арттеми. Сана тăратмарĕçи?

Петĕр. Кам тăраттăр. Мана никам та палламасĭ. Урапа тĕпне ларнă та епĕ, тăвайаккинђен катăртаттарса анатăп, ăна-кăна шухăшламан та.

**3-мĕш курăнни.**

*Марйепе Лисук кĕреççĕ.*

Ваљкка (Лисука). Ну, есĕ хатĕри?

Лисук. Хатĕр.

Ваљкка. Апла пулсан васкас! Петĕр, есĕр кайса лашана çавăрса пырăр, епĕр Лисукпа кунтан тўр сукмакпа тухатпăр.

(*Петĕрсем тухса кайаççĕ, Ваљккапа Лисук çех йулаççĕ*).

Вађкка. Ну, Лисук, утар, тен ђăнахах та телейлĕ пулăпăр.

Лисук (*ăна ђарса*). Вађкка!...

Вађкка. Мĕн тата?

Лисук. Телейлĕ пулăпăрши епĕр?

Вађкка. Икĕ йуратакан йепле телейлĕ ан пулђђĕр? Кам пире ђартăр? Ерхипи?

Лисук. Атте-анне мана Ерхипе парасшăнçке туртса илмĕçши кайалла?

Вађкка. Ху таврăнас темесен, сана кам ирĕксĕр илсе кайтăр? Парне-пиллĕх пире кирлĕ мар, унсăрăн та пурăнатпăр; пурлăхне тума ман вăй çитĕха; пиллĕхĕ ытах кирлĕ пулсан, хамăн аттепе-анне те парĕç.

Лисук. Ах, Вађкка, çапах темшĕн ман ђун хускалаť. Кушара килнĕ ђух хĕпĕртесе килтĕм, кайма тăрсан хăраса ўкрĕм: санăн пуçна çини пулмĕши? Ерхип питĕ усалçке!

Вађкка. Вађкка пуçне çийиђђен хăйĕнне çийĕ, ăна мансăрăн та таврас текеннисем пур, салтакран мĕнле йулнине пĕлеççĕçке! Ан хуйхăр, ан шухăшла, Лисук: кама йуратан—çавна шан. Халђђен есĕ мана йурататăп теттĕн, тен пайан шухăшна улăштартăн пулнех: хăратăн, йе урăххине йурататăн пулсассăн, халех кала–ирĕксĕр илсе каймастăп.

Лисук. Вађкка, мĕн калатăн, мĕншĕн çиленетĕн есĕ? Есĕ пĕлетĕн: ман йуратни—есĕ çех! (*Пĕр пĕрин куçĕсенђен пăхаççĕ*).

Вађкка (*Лисука аллинђен тытса*). Сана епĕ ĕненетĕп! Ну, васкар: пире кĕтеççĕ (*тухаççĕ*).

## 9 мĕш курăнни.

*Кушартан шăкăр-макăрсем салăнаççĕ. Йулашки хут кăруççел çĕмĕрлет. Ерхиппе йулташĕсем кĕреççĕ, пурте тўмисене вĕçертсе йанă, çари пуçăн.*

Ерхип. Ťфу! Супса çўрени те ахалех пулђĕ.

Мурсай. Ой, ыртăм. (*Тăсăлса выртат, Ерхип ларат, ыттисем те лараççĕ, ђĕлĕм туртаççĕ*).

Ерхип. Не везет, чорт побери!

(*Çак вăхăтра пылак шыв сутаканĕ пырса тухат: Пылак шыв кирлĕ мари? Пылак шыв! Ерхип çиллипе ăна пăскăртса йарат*).

Мурсай (*месерле выртат*). Ерех çунђĕ, тытнăскере алăран йатăн, анкăминкĕ!

Ерхип. Суйа! Венђетрен кайса тăпăлтарса илетĕп!

Мурсай. Ей!... Пĕр пуп аллине лексен—ампăрлинт!

Ерхип. Ну, çу-ук! Епĕ алăран йамастăп.

Мурсай. Йамастăн та, вĕçрĕçха.

Ерхип. Сан пирки пулђĕха çав!

Мурсай. Çапла—сан пирки.

Ерхип. Сан пирки çав! Алла лекнĕскере тартрăн.

Мурсай. Ăна тытса мĕн усси пур... Кађђинеђђĕ вот! А-ку мĕн, унăн укçи те çук пулмалла.

Ерхип. Укçи вĕсен нихăшин те çукха та.

Мурсай. Е-ей! Апла пулсан тарни те паха.. Йе ал тупанĕ кĕçтетђи? Ха-ха-ха.

Ерхип. Мĕнле вĕсене венђет тума ђарасђĕ?

Мурсай. Ђарасси йăвăр ĕçех марçке. Ак пайанах Кутемертен çĕмĕрсе илсе килетпĕр!

Ерхип. Тĕрĕс калатăн! Хаљ киле вĕçер те, хĕрĕн ашшĕсене систерер, унтан Кутемере вăрçăпа кайар. Йурăти?

Пурте. Çĕмретпĕр!

Мурсай. Ну-и ĕçтерет те ĕнтĕ Кăвак Ентрей хĕрне çăлса парсан!

Ерхип. Аттăр еппин! Вăхăта ирттерес мар, каçђен Кутемере çитес. (*Мурсайа*). Лашасене кайса çавăр.

(*Хыпаланса кайаççĕ. Салтăк атђисем алшăллисемпе сиксе йурлăсă кĕреççĕ*).

Пĕри (*Ерхипе, тарнине курса, хыçалтан кăшкăрат*). А-а! Хăравçă! Салтакран хăтăлтăн та, авланас тесе çӳрен. (*Пушă ерех кĕлентђипе хыçалтан перет*).

(*Вара купаççă каска çине ларат те, ташлаттăрат. Мĕн пур хĕрсем, арçын атђасем пухăнса ала çупаççĕ*).

*Ђаршав.*

---

## II-мĕш пайĕ.

*Йалти ђухăн пÿрт. Сылтăм йенђе кăмака, йунашарăх ђăлан; пĕр сĕтел, сарлака сак, вăрăм сăксем, пукансем. Венђете кайма хатĕрленеççĕ. Кÿр шĕсем пыркăланă, сăра ĕçеççĕ. Сылтăм йенђе путмар çинђе сывмар амăшĕ выртăт.*

1 кÿршĕ. Хветукăн ывăлĕ мăшăрлантармаллăх пулђĕ те!

Хветук. Ађин çулĕ çитнĕ те-ха, темĕн—путлĕ пулĕши... Хаљ венђет те туман та, тармасан йурат. Ашшĕ-амăшĕнђен ыйтмасăр илсе килнĕ хĕр ђас таракан.

1 кÿршĕ. Ей... аплą пулмĕ: хĕрĕ хăйĕн ирĕкĕпе килнĕçке: как-калас йуратса.

Амăшĕ (*аран калат*). Ах... Хветук... шыв парха... пĕтĕм тута-çăвар типсе карĕ, сурђăка çăтмалла мар...

Хветук. Сăра ĕçместĕне!

Амăшĕ. Кирлĕ мар... шывах пар...

1 кÿршĕ. Сăра йурати, Хветук... Ђирлĕ çынна сăра йурамасť, ăшђике пăсаť. Шывах пар.

Амăшĕ (*ĕçет*). Венђете... кайма хатĕрленеççĕи?

Хветук. Нумайах тăмаççĕ... Ваљкка пађăшкапа йумахлама карĕ.

Амăшĕ. Лашасем хатĕ... (*ÿсĕрет, шыв ĕçет*) хатĕри?

Хветук. Хатĕр. Аттесен икĕ лашине те кӳлетпĕр терĕç, Микула пиђђесем тарантас параççĕ.

Амăшĕ. Йурĕ.

Хветук. Çаплаçке вара вăл ђирлĕ çынăн..: пурне те пĕлес килет.

1 кӳршĕ. Ара ывăлĕ авланат те, пĕлес килмесĕр, Хветук.

Амăшĕ. Ашшĕ... килха...

Хветук. Мĕн тата...

Амăшĕ. Ман хĕрпе йумахласа пăхасђĕ.

Хветук. Вĕсем хаљ пăлтăрта венђете кайма кĕпесем виçеççĕ.

Амăшĕ. Кунта ђĕнха ăна...

Хветук. Мĕн тума кирлĕ вара сана?

Амăшĕ. Есĕ йалан çапла калайран.

1 кӳршĕ. Хветук, тухса ђĕнсем.

Хветук. Хĕр йутшăнĕ, мĕнле ђĕнес ăна, вăтанĕ.

1 кӳршĕ. Малтанăх йутшăнĕ те, вара иртсе кайĕ.

Хветук. Хăвах тухса кĕреймĕнши уçăлмалла.

1 кӳршĕ. Йепле, Хветук, тухтăр вăл, аран сывлат.

Амăшĕ. Хамах тухса кĕремçке еппин, тăма пулăшха.

Хветук (*пулăшат*). Хуллен уçăлмалла тухса кĕрĕн.

Амăшĕ (*аран тăрат*). А-ах... Ура вăй пĕртте çук, утса çитейрĕпши... (*Ашшĕ çавăтса кайат*).

1-мĕш хĕрарăм Йăлтах пĕтсе кайнă кин, нумайах пурнаймаст пуљ.

1 к ӳ р ш ĕ. Вилиҫҫен мăшăрне пиллесе хăварсан йурĕҫҫĕ. (*Хветӳк кĕрет*).

Х в е т ӳ к. Выртасҫĕ вырăн ҫинҫе. Ҫух ура ҫинҫе тăратӳ, ҫапах хăй ваҫҫи ĕҫ тупса выртатӳ.

1 - м ĕ ш х ĕ р а р ă м. Ах, Хветӳк, есĕ апла калан: харпăрхăй аҫипăҫи ăсли, ухмахи—хăйĕннехҫке, ҫапах хăйĕннех. Кирек мĕнле пулсан та, амăшĕ аҫине ырă тăвасшăн... Мĕн те пулин каласа вĕрентсе хăварас, тет пуҫ. Аҫапăҫана мĕнле пăхса ӳстермеллине кăтартса хăварас, тет пуҫ.

Х в е т ӳ к. Аҫипăҫи пулсан, хăйсемех вĕренесҫĕ пăхма.

1 к ӳ р ш ĕ. Ей, Хветӳк, мĕн калаҫан, аҫăпăҫа ӳстересси ҫăмăл ĕҫ мар... Тӳрех хăй, как-калас сăмах тухнăран, ҫуралнă та—ĕҫе йурăхлă... Апла марҫкехе... Халĕ ăна сăпкара та сиктерес пулатӳ, лăпăрлапăрне те тасатас пулатӳ... Пăҫах ăна амăшĕн тăвас пулатӳҫке.

1 х ĕ р а р ă м. Ара есĕ калан... Сирĕн мĕн!.. есĕр пĕлетĕр хăвăр арҫын ĕҫне те, хĕрарăм ҫине ҫавă, рăнса та пăхмастăр. Пирĕн аҫа та пăхас пулатӳйашка ҫăкăр та хатĕрлес пулатӳ, урайне те ҫăвас пулатӳ.

1 к ӳ р ш ĕ (*витлесе*). Кĕпе те ҫăвас пулатӳ... Хе-хе-хе! Есĕ тата хĕрарăм майлă пулнине кура алла усса ларма та хатĕр... Урайне те ҫумасан, вут та хутмасан, как калас, ытла улпута тухса кайăн.

Х в е т ӳ к. Ҫитĕ тавлашма... Килха, ĕҫха (*ĕҫтерет*).

## 2-мĕш курăнни.

*Ваҙкка амăшне Марйе ҫавăтса кĕрет.*

А м ă ш ĕ. Ах, ыртăм, вăй пĕтрĕ.

1 х ĕ р а р ă м. Выртса канха ĕнтĕ, кин, ырмасăр—ыртăн пуҙ.

А м ă ш ĕ. Кĕҫĕр ҫĕр каҫсан йуратҙĕ... Ывăла венҙет туса килиҙҙен пурăнасҙĕ.

1 х ĕ р а р ă м (*выртма пулăшат*). Тур пулăшсан курăнха... Выртса сывлăша ҫавăрха.

А м ă ш ĕ. Йăлтах вăй пĕтсе кайрĕ... Пĕтĕм ăшҙик ыратат. Ĕнер самай пек туйăнатҙĕ... Пайан каллех йăвăрланса кайрăм... шыв... шыв... ĕҫесҙĕ.

1 х ĕ р а р ă м. Халех... шыв, тет, Марйе, илсе килха... (*Марйе илсе пырат*).

А м ă ш ĕ (*ĕҫет*). Хаҙ пăртак ҫăмăлтарах пек туйăнат. Марйе, есĕ кай... Хĕре пăртак йăпаткала, ан хуйхăртăр..

М а р й е. Йурĕ (*кайат*).

А м ă ш ĕ. Ех, апăрша*)... Хăй Ваҙккана питĕ йуратат пулас та.

1 х ĕ р а р ă м. Ун пек аҙана йуратмасан, кама йуратмалла. Пăртак канха.

А м ă ш ĕ (*йерипен макăрат*).

1 х ĕ р а р ă м. Ҫитĕ... Мĕн пулҙĕ? Ашҙик ыратати?

А м ă ш ĕ. Ҫук. Хĕрхентĕм. Епĕ вилсен, пит хĕн пулатҫкеха ăна: алăри аҙана та пăхас пулат, ура

*) Мĕскĕн.

çинђе ђупаканнисемпе те аппаланас пулаť. Çамраклах хěн кăтартатăп. Çын ађипе камăн ђăрманас килтěр. Ман ађасемçке вěсем (*макăрат*).

А ш ш ě. Мěн пулђě тата?

1 х ě р а р ă м. Ђунě хурланаť пулас, иртсе кайěха.

**3-мěш курăнни.**

*Кăвак Ěнтрейпа арăмě, унтан кинě кěреççě.*

Х в е ť у к. Ентрей Иванђ, килěрех, тěпелерех иртěр.

К ă в а к Е н т р е й. Иртмелли çук пирěн. Епěр хěр патне килтěмěр.

1 к ў р ш ě. Мěн, Ентрей Иванђ, кутăн-пуçăн тăвиђђен ал тытăр та, йурě...

А р ă м е (*çиленсе*). Çук! Хěре памастпăр!

К ă в а к Е н т р е й. Карђăк, ђарăн: сан ěç çук унта!

А р ă м ě (*хыттăн макăрат*). Ěмěр курман намăса кăтартрěç! Пирěн йата çěртрěç! Хěр пуçне пăсрěç!

К ă в а к Е н т р е й. Ђарăн тенě сана! Мěн çухратăн, намăса пěл.

Х в е ť у к. Апла-капла пуласса кěтменђђě епěр, Ентрей Иванђ. Хěре никам та ирěксěр илсе килмен, хăй ирěкěпе хăй килнě.

1 х ě р а р ă м. Есě, тăхлађă, ђарăнха, тен майěпе иртсех кайě, килěшěпěр... Апла кутăн выртсан, сире те, пире те аванах мар. Хурăнташлă, пěлěшлě пулар.

К ă в а к Е н т р е й. Ěçе майлă тăвас тесен, сирěн хăвăрăн пěлсе тумаллађђě... Капла мěнле: ни

хӑтана пыман, ни хӗр ҫум укҫи...,

Хветӳк. Ђимха, Ентрей Иванђ, ларха... пӗрик курка ӗҫтерем.

Кӑвак Ентрей. Кирлӗ мар, ман сӑра шухӑш мар, хӗрпе йумахласа пӑхас та, ӗҫе татас.

Хветӳк. Хӗрне ђӗнӗпӗр кунта... Тӑхлађ, ларсам, мӗншӗн ура ҫинђех тӑратӑн. Ҫакӑнталла иртсе ларха, сӗтел патнерех.

Арӑмӗ. Ентӳк, мӗн тата есӗ ђарӑнтӑн... Ыйт, ӑҫта хӗр? Кӗлетреи? Пӑлтӑртаи?

Кӑвак Ентрей. Кунта ђӗнетпӗр, терӗҫ, мӗн ес хулхасӑри?

Хветӳк. Вара, вара халех ђӗнетпӗр... (*тухса*). Марйе, хӗре кайса ђӗнха, килтӗр, ашшӗсем ђӗнеҫҫӗ.

Марйе. Йурат.

Хветӳк. Халех килет, пӑртак кӗтӗрха. (*Ӗҫтерме тытӑнат, лешсем ӗҫмеҫҫӗ*).

Арӑмӗ (*кинне*). Есӗ илӗрт Лисука. Ҫамрӑк пуҫна пӗтеретӗн те, тен майӗпе ҫаврӑнӗ.

Инкӗшӗ. Мӗн калама пултарнине калӑп.

## 4-мӗш курӑнни.

*Лисукпа Марйе кӗреҫҫӗ.*

Хветӳк. Акӑ килђӗ, йумахласа пӑхӑр.

Кӑвак Ентрей. Ман санпа вӑрттӑн йумахлас пулат, аӑаха пахђана.

Хветӳк. Мӗн тума пахђана тухмалла, акӑ ђӑланта никам та ҫук, кӗрӗр те, йумахлӑр.

Арӑмӗ. Мӗн, хӗр ҫухаласрах хӑратра? Хамӑр хӗрпе хамӑра ирӗк, ђарма пултараймастӑр.

Хветук. Вăл çаплах ĕнтĕ, тăхлађ, ђăн сăмахăн суйи çук.

Кăвак Ентрей. Ес, карђăк, çăварна пăклаха, ĕç тума памастăн. Килха, Лисук, ђăлана (*кĕреççĕ*).

1 хĕрарăм Тăхлађ, пĕр илсе килнĕ йапалана кайалла тумаççĕ те ĕнтĕ. Килĕшес пулатте...

Арăмĕ. Ĕмĕрне курман намăса кăтартрăр! Кутемер халăх пуйан, ђаплă, ăслă теççĕ. Тфу! Пўтсĕрсем! Хĕр вăрласа хăйсен йатне çĕртеççĕ. Куçăм та ан куртăр ку йалăн çыннисене! Кутемер çынни пирĕн кĕрў пулаймĕ!

1 кўршĕ. Ай, аплах мар та ĕнтĕ... Как-калас, çил-тăвăл тўрлентĕрха... Хе-хе-хе! (*тђĕлĕмне шаккатђ*).

Кăвак Ентрей (*тђăлантан*). Ес, карђăк, йерипен! Ытлашши ан пупле.

Арăмĕ. Мĕн, ман çăвар хупса лараси?

1 хĕрарăм. Çаплах, çаплах ара. Хăнана килсен пуплес пулат. Хветук, тăхлађа ĕçтерха, кăмăлĕ çавăрăнтăр.

Арăмĕ. Ĕçместĕп, кирлĕ мар.

Хветук. Ĕçха ĕнтĕ Кутемер сăрине, мĕн тути калат: хăмла тути калати, салат тути калати, ĕçсем.

Арăмĕ. Куçăм та ан куртăр кутемер сăрине!

Хветук. Ак тата, ĕçха!

1 хĕрарăм. Ĕçсем ĕнтĕ, тăхлађă.

Арăмĕ. Ĕçместĕп, кирлĕ мар!

1 кўршĕ. Ĕçсем! Хе-хе-хе!

Арăмĕ. Кирлĕ мар!

Хветук. Ирĕксĕр ĕçтерес мар.

1 к ӳ р ш ĕ. Тăхлаҕăн (*тҕĕлĕмне пăккат*), как-калас, ăшҕик хирĕҫнĕ пуҕ, тӳрленсен ĕҫĕ.

А р ă м ĕ. Мĕн есĕ ҫĕтрĕн тата, ҕăлантах ҫĕр каҫас тетĕне?

К ă в а к Е н т р е й (*тҕăлантан*). Сан ĕҫ ҫук, карҕăк!

А р ă м ĕ. Мĕн ухмах хĕрпе йумахламалли пур пыраť пулсан, илсе кайас, пымасť пулсан, кирлĕ мар, йултăр!

1 к ӳ р ш ĕ. Тахҫанах ҫапла каламалла. Ак майĕпе ҫилтăвăл лăпланаť.

(*Ашшĕпе хĕрĕ тҕăлантан тухаҫҫĕ*)

К ă в а к Е н т р е й. Еппин есĕ пырасшăн марха?

Л и с у к. Пымастăп.

К ă в а к Е н т р е й. Ну, ан пыр; йулан пулсан йул, ирĕксĕр илсе каймăпăр.

А м ă ш ĕ. Мĕн киле те кайасшăн мари тата есĕ, намăссăр? Аҫу йатне ҫĕртрĕн. Пуйан ҫынна кайма пĕлмерĕн, кунта тухса сĕнкĕлтетрĕн! Кăна пĕлнĕ пулсан, ҫуратмалла та марҕĕ сана.

К ă в а к Е н т р е й. Ну, ну, ҫитĕ сана супĕлтегме.

1 к ӳ р ш ĕ. Ара, тăхлаҕ, как-калас, ҫуратасси пирĕнтен килмест те ĕнтĕ вăл! Хвеťук, ĕҫтерха хăнасене.

И н к ĕ ш. Лисук, килха кунта. (*Лисук пыраť, инкĕшпе йунашар лараť*).

Х в е ť у к. Ентрей Иванҕ! Ларсам сĕтел патнерех.

К ă в а к Е н т р е й. Мĕн тăвас, карҕăк, хĕре хăвармах лекет пуҕ.

Арăмĕ. Кирек мĕн ту, епĕ пĕлместĕп.

Кăвак Ентрей. Маншăн пулсан ĕçкĕ пултăр, урăх нимĕн те кирлĕ мар, пурĕ-пĕр каҙҙа парас пулаť.

1 кўршĕ. Тахçанах çапла кирлĕ: Хвеťук лайăх çын, есĕр те, как-калас, аван.

Хвеťук. Вара, вара! Килха, Ентрей Иванҙ, ларсам сĕтел патнерех. Тăхлаҙă, сиксем кунтарах.

Кăвак Ентрей. Ну, карҙăк... Неҙҙăвă каллĕ-маллĕ вырткалас... Кил, лар!

Хвеťук. Малтан çуттинҙен пуçларха. (*Ерех ĕçеççĕ, вара сăра*). Ну, тав сире! Пĕрле пурăнмалла пултăр!

Инкĕшĕ. Мĕнле есĕ çакăнтах йуласшăнха? Амăшĕ хаљ вилет, вара йепле пурăнас тетĕн? Алăри аҙана кам пăхтăр, санăнах пăхас пулаťçке!

Лисук (*ҙирлĕ амăшне пăхса*). Есĕ ман пуçа йăлтах тепĕр майлă çавăрса йатăн. Епĕ кун пек пуласса пĕлмен, Ваљккапа иксĕмĕрех пурăнатпăр пуљ тенĕҙҙĕ. Инке, ҙăнах мĕн тăвасха вара ман?

Инкĕшĕ (*шăппăнтарах*). Епĕр кунта сана илмеллех килнĕ. Лашасем анкарти хыçĕнҙе кĕтсе тăраççĕ, Ерхипсем те унта.

Лисук. Ерхипсем! Çук, каймастăп, кунтах йулатăп, каймастăп!

Инкĕшĕ. Мĕн тата, мĕн пулҙĕ? Шухăшлаха, кунта йулса мĕн усси пур сана? Хăна ху пĕтеретĕн! Ҙирлĕ çынсене курмани, аҙапăҙа сассине илтмени?

Лисук. Ах, инке! Епĕ Ваљккана йурататăп.

Инкёшё. Йуратнă, иртнĕ, çав анђах.

Лисук. Мĕнле пăрахса кайас ман? Намăс! Мана никам та ирĕксĕр илсе килмен, хам килнĕ...

Инкĕш. Аĭаха пахђана, кунта кансĕрлеççĕ йумахлама (*тăраççĕ*).

Хветук. Есĕр ăçта тата, сĕтел патне ларăр.

Инкĕш. Епĕр халех кĕретпĕр. Сирĕн пахђана тухса курма йураĭши?

Хветук. Тухăр, тухăр... Кам ђараĭ, курăр.., (*Кайаççĕ*). Пăртак çырткаларха. Тепрер йăвантарас марши?

Кăвак Еңтрей. Çитет пуљ.

Хветук. Мĕн çитесси, тепрер кирлĕха (*тултарат*). Мĕн ман Ваљкка килмерĕ çак, тĕттĕм пулиђђен венђете кайас пулаĭ.

1 кўршĕ. Пупĕ килте çук пуљха, кĕтет пуљ...

Кăвак Ентрей. Вăл пулкалаĭ. Пĕлтĕр çак (*кăтартат*) ман вилме тытăнђĕ те, кĕл тутарас тесе пупа илме кайрăм... Пыратăп, килте çук, хĕреспе çўреме кайнă, терĕç. Йураĭ... Касђен кĕтес пуљ терĕм.. кĕт-кĕт... пуп çĕрле тин килђĕ, антра сурăх пек ўсĕр. Ман карђăк сывмар, çапла-капла, терĕм... И-и пуç ыратаĭ, ђас пыраймастăп, ыран кил, терĕ... Йураĭ, карђăкки ман вилме пĕлмест те, тепĕр кунђен кĕтрĕ. Хе-хе-хе!

Арăмĕ. Çаплаçке çав пĕр ўсĕрĕлсен, темĕн те сўпĕлтетет, тепле ђĕлхе-çăвар çав сан, сылăха пĕлесђĕ!

Кăвак Ентрей. Карђăк! Сан ĕç çук!

1 кўршĕ. Хе-хе-хе! Как-калас, тăхлађ, çылăхĕ çырма пусĕнђе, пупĕ карта хысĕнђе, теççĕ те ку

ђухнехи çамрăксем, епĕр те аташма пуçларăмăр пуђ.

### 5-мĕш куранни.

*Хыçалта сасăсем илтĕнеççĕ.*

Петĕр. Йуналутпа хăвалăр, Ваљккана калăр, лашана ан тăвартăр!

Марйе сасси. Арттеми, ђуп хыçалтан.

Тепри. Петĕр, ђасрах! Ђупăр, ђупăр! Ыраш пуссипе тарђĕç.

Марйе. (*Алăка уçса*). Хвеťук пиђђе, хĕре илсе карĕç! Ыраш пуссине тарђĕç (*пурте тĕлĕнсе кайнă*).

Хвеťук. Есĕр ларăрха, мĕн пулнă, тухса пăхам (*кайать*).

1 кўршĕ. Ак тата, пире суйаççĕ, такмак çех тыттарнă мĕн? Кўршĕсем, кунта ларса ĕç тухмĕ, тухса пăхас.. Ну, ну, Ентрей Иванђ, ерех те ĕçес, хĕрне те тартас.. (*Хыпалан̆са тухса кайать*)... Каккалас... (*сурать*).

1 хĕрарăм. Ťфу, намăссăрсем!... (*сура-сура тухса кайать*).

Арăмĕ. Ерхипсем тумаллине турĕç, пирĕн те кайас ђасрах, тăрас мар...

Кăвак Ентрей. Карђăк, мĕн пулђĕха ку капла?

Арăмĕ. Пулас пекки пулнă ĕнтĕ! Çавăрăнкала ђасрах, мĕн васкамастăн, кўпсе тултарнă! (*Тĕртсех кăларса йарать, хăй те тухать. Пўртре никам та çук*).

Амăшĕ (*пăртак тăрсан*). Ах... ах... çук... ђун... тухаť... сывлаймастăп... шыв... шыв... ĕçесђĕ... (*никам

*та илтмест*)... Вађкка ывăлăм... санпа йумахлаймасăрах вилепши... ах!.. вилетĕп... йăвăр... сывлăш çитмест...

## 6-мĕш курăнни

*Вађкка йўле пилĕкĕн кĕрет.*

Вађкка (*сĕтел çине тайăнса*). Пăрахса кайрĕ... Ну кайах, кирлĕ мар! Йуратмастăн пулсан, ирĕксĕр ан тух, кирлĕ мар, урăххине кай... Анђах... анђах... ăмма улталарăн есĕ, Лисук? Йуратататăп, тесе сăмах патăн, аçу-аннўрен вăрттăн тухса килтĕн, кайран пăрахса тартăн?..

Амăшĕ. Вађкка... (*Леш илтмест, малалла калат*).

Вађкка. Мана намăса кĕртрĕн, ху та ыррине илтеймĕн... Ђухăнтан хăрарăн, ĕçрен тартăн... Йурĕ! Ђухăна йуратмастăн пулсан, пуйана кай, ĕçрен хăратăн пулсан, Ерхипе тух...

Амăшĕ. Вађкка... килха...

Вађкка (*тђупса пырат*)! Ах, епĕр анне çинђен мансах кайнă. Анне, мĕн кирлĕ?

Амăшĕ. Сурђăк капланђĕ.. Вилетĕп... вилетĕп... пил сана, ађам... (*вилет*).

Вађкка. Анне (*йĕрет*). Анне! (*аллинтђен тытат, вара пăрахат*). Вилђĕ! Йурĕ, Лисук! Есĕ аннене те канăçлă вилме памарăн, манăн пурăнăçа та ĕмĕрлĕхе пăсрăн, йалйыш умĕнђе намăса кĕртрĕн!.. Çак вилĕ умĕнђе калатăп: ман аннене хĕрхенсе кăмăл тумарăн пулсан, ман тăшмана та нумай ан мăшкăлаттар! Есĕ кађђа кайиђђен кĕтемха;

кама кайăн! Кайас пулсан йут çĕре кай, ҳăвăр йала мар! Йенђен Ерхипех кайсассăн, хам пĕтем те, анђах ăна кулма памăп!

### 7-мĕш курăнни.

*Пĕтђĕк атђи Микула кĕрет, Ваљкка ун çине пăхса тăрат.*

Микула (*амăш патне тђупса пырса*). Анне-е! Анне! Епĕр Кĕркурипе Киреметре хурăн çырли нумай пуçтартăмăр. Сана ђейпе ĕçме парами? Е!.. Анне, тăрха! Пăхха, мĕнле хĕрлисене тупрем епĕ! Анне, ма ђĕнместĕн вара есĕ?

Ваљкка. Микула, аннў çывăрат, кай хаљ урама. Тухса пăртак выља та, вара кĕр.

Микула. Вăл мана çырла пуçтарма хăй йађĕ, ак пĕтĕмпех хам çийетĕп те йаратăп, хăвармастăп та.

Ваљкка. Çи, çи, шăллăм, вара каллех кайса пуçтаратăн. (*Ăсатса йарат, вара шăппăн хуйхăрса, амăшне тўрлетет, ун çине ўксе йĕрет*).

*Ђаршав.*

## III-мӗш пайӗ.

*Пуйан Ерхип пӳртӗ.*

### 1-мӗш куранни.

*Тулта туй ҫӗмӗрлет. Пӗри, пӳрте кӗрсе, пӑшал илсе тухса кайат. Хӑтисем, пӑшал сасси илтсен, сӑра куркисемпе илме тухаҫҫӗ. Мӑн кӗрӳ сӑмах ҫаптарни илтӗнет; вара хӑтисем, мӑн кӗрӳ кӗреҫҫӗ. Вӗсем хыҫӗнтӗн пӗркентӗкпе пӗркеннӗ хӗре пӗри сылтӑм хул ҫинтӗ ҫӗклесе кӗрет. Кӗнӗ тӗух, пулас упӑшки хӗрне хыҫалтан пушӑпа ҫапат. Вара хӗре сак ҫине кайса тӑратаҫҫӗ. Катӗтӑ, унӑн йулташӗсем пурте ҫӗнӗ сӑкмансемпе, кӑвак-шӗвӗр калпаксемпе, кашнин аллинтӗ пушӑ. Хӗрӗпе йунашар катӗтӗи кайса тӑрат. Ҫав вӑхӑтра хӗрӗн инкӗшӗпе катӗтӗин инкӗшӗ сӗтел хушшине ҫӗклесе килнӗ икӗ минтере хураҫҫӗ. Хӑтипе тӑхлатӗи пиллеме лараҫҫӗ, вара ҫак сӑмахсемпе пиллеҫҫӗ.*

Мурсай (*хулпуҫҫи урлӑ алшӑлли ҫыхнӑ*). Ну, Тикка пиҕҕӗ, мӗнле пиллетӗнха? Шур сурӑх, хӗрлӗ ӗне, хур-кӑвакал пиллетӗне? Йе пӗр кӗлетпе пӗр пӳрт парас тетӗн?

Тикка (*пиллет*). Вӑрман пек йышлӑ пулӑр, уй пек пуйан пулӑр. Килти йумаха йала ан кӑларӑр. Йалти сӑмаха киле килсен ан калӑр. Пире,

аттис ене, хисеплёр: ватти ватах пултăр, çамрăкки-çамрăках пултăр, пире ан пăрахăр, алăк кутне ан хăвалăр; иксĕрĕн сăмах пĕрле пултăр.

А м ă ш ĕ. Манăн тата мĕн калас: хамăрăн пек вырăна лармалла пулăр; пӳрт тулли йыш пултăр (*кинне*). Ĕçрен ан хăра, шыв кӳме кайсан, кайри çынна ан кĕт, малти çынна çитме тăрăш; ана çине кайнă ђух, çав ана çине кайатăп тесе кала. Епĕр калайманнине хăвăр аса илĕр, урăх нимĕн калама та пĕлместĕп. (*Укçа параççĕ*).

(*Пиллесен, хĕрпе катђђи сĕтел тушшине лараççĕ. Хĕрарăмсем сылтăм йенне, арçынсем сулахай йенне лараççĕ. Вара ташла тухçлаççĕ, мăн кĕрӳ пуçласа парать. Вара каллех ĕçеççĕ, йурлаççĕ, пăртак тăрсан çĕнĕрен ташша йараççĕ*).

М у р с а й (*ӳсĕрскер, ташласа*):

Их ту, мах ту!
Ывăл ту, хĕр ту,
Хреснашшĕне мана ту!
Ерхип туйĕ ђаплă туй,
Лисук çумĕ ђаплă çум:
Çитмĕл йалти сыннине
Çителĕклĕ пыл сăри! (*лаптђăнса ташлать*).

Т и к к а (*ташласан ĕçтерме пырса*). Ну, Мурсай, сăмахна ытла та çыпăçуллă йухтаратăн çак есĕ: килха, çăвар типрĕ пуђ, кăшт сĕрха (*парать*). Мурсай тесе ахалех ђĕнмеççĕ мĕн сана!

М у р с а й. Мурсай тени тăмсай тенийех мар ĕнтĕ, Тикка пиђђе! Çапла мари? (*ĕçет*).

Т и к к а. Çавă ĕнтĕ: хама та Тикка теççĕ те, çапах машкăланийех мар тетĕпха, саплăк тумтир

тăхăнсах курманха ку таранђђен, тырпул, укçа йенђен те Кăвак Ентрейрен йулса пыман, хамăн ађана Ерхипе те унăн хĕрне илме тивĕçлĕ пуђ тесе шутлатăп. Çаплаи, туй халăх?

Пурте. Ара, ара! Çапла пулмасăр!

Мурсай. Туйне нађар тумашкăн пирĕн Лисук нађар мар! Кутемер пек йуг йала хĕр вăрлама каймастпăр: хамăр йалта та ђипер хĕрсем çителĕклĕ; Кутемер йал (*шăппăн саспа*) хĕрĕсен купарђи те çук, теççĕ. (*Пурте ахăлтатса кулаççĕ*).

Ерхип (*тўсеймесĕр кулать*). Ну и Мурсай! Сан сăмахсене Кутемерсем илтсен мĕн калĕђђĕçши? Ха-ха-ха!

Мурсай. Пуринђен ытла Вађкка! Ха-ха-ха! (*Ерхип патне хыпаланса пырать, ăна кăшт хăй патне туртса илет*). Ну и мăшкăл та! Тăмсай, туп-ман урăх хĕр! А лайăх лартрăмар, .ђике тăршшĕ. Ухмахсем, вăрласа кайнă хĕре шанса инкĕшпе пахђана кăларса йанă. Ха-ха-ха! Аран тарса хăтăлтăмăр çапах, ыраш пуссипе тўртен тарман пулсан, пўлсе илетђĕç. Вара хайхи вăрăм çўç венђет калпакĕ тăхăнтарса лартатђĕ. А пĕр пуп аллине лексен—ампăрлинт!

Ерхип. Ытла питĕ ђас! Пуп аллинђен мар, еп ăна Вађкка путмарĕ çинђен те сĕтĕрсе антараттăм!

Мурсай. Ха-ха-ха! Ентереснă пулĕђђĕ хăйамат! Еппин пирĕн пуп пăркăђласан тин каймаллађђĕ Кутемере! Вара—ампăрлинт-ти-ти-тў-ў! пулатђĕ. Ха-ха-ха!

Л и с у к (*хăй тĕллĕн*). Ах, телейсĕр ђунăм Мĕншĕн кађђа тухрăмши? Мĕншĕн çакă туйа пуçлиђђен, пуçа çимерĕмши? Атте-анне хушнине мĕншĕн хирĕç пымарăмши? Хамăн ђунăм савнине йепле пуçпа пăрахрăмши? (*йĕрет*).

Е р х и п (*ăна сиссе*). Ну, ес мĕн тата? Ђăнахах йĕретĕн мари? Йĕрес пулсан сăвăллă йĕр! Кун пек ман çумра пĕђĕк ађа пек ÿлесе ан лар! Епĕр йумахлани кăмăла каймари, йе Ваљкка аса килђĕи? А? Асту, асăнтарам сана ун йатне! Хаљ есĕ ман килте, тилхепесене Ваљкка пек пушă тытмăп, ман алтупанĕсем ђăмăр!

Л и с у к (*хĕр йĕррипе калат*).

Ах, Ерхипĕм, усал ђун! (*икшер хут*)
Мĕншĕн апла каланши?
Саншăн вара ырă кун
Хĕнессинђе пулĕши?
Хăвăн çамрăк арăмун
Телей сантан килĕши?
Хĕнхурлăхпа куççулĕ
Хунах асап кÿмĕçши?

Е р х и п. Ђарăн! Йе хăвăн сăввусемпе туйа пăсас тетĕни! (*аллипе ђышат*).

Т и к к а. Ара, кинĕм, йĕрсе çÿренипе çитет пуљ. Ан йĕрсем. Мĕншĕн ђуна хускататăн? Килте апте, йалта та йĕрнĕ. Кунта лăплансан та йурат: апла йал йăлине пăснă пек пулаттă вăл. Хуна та ытлашши хуйхăртатăн, туй халăхне те хурлантаран... Ывăлăм манăн нађар ађа мар, çынна пусмăрлаттармастă, çын айне пулма йуратмастă, сана та çиђĕ йутран ђипер сыхласа усрĕха.

Лисук (*макăрса хирĕç калат*).

Ах, ађиçĕм, ађиçĕм!
Еп йĕрессĕм теменђђĕ,
Тулса çитнĕ куççулне
Тӳсме вăйăм çитмерĕ!
Атте-анне кăмăлне
Хирĕç пырас мар тесе,
Ирĕксĕрех çак киле
Тур çырнине килтĕмçке.
Туйра сиксе ташлани,
Ĕçе-ĕçе йурлани
Ман хуйхăма сирес çук,
Ђун савнине кӳрес çук!
Ах, ађиçĕм, ађиçĕм!
Пăсăк хĕрĕн туй ĕçки
Пăсăлнăшăн ан макăр,
Ман куççуђшĕн ан хуйхăр (*йĕрет*)
Йалăн ђапне çĕртнĕшĕн
Мана айăп ан тăвăр!

Т и к к а. Ей, мĕн калатăн есĕ çак кирлĕ мара: аçу йађĕ пăсăлманха, йалăн ђапĕ уншăнах хăрмĕ йат çĕресси Кутемере пултăр. Пирĕн тăвансем нађар-ђухăн мар, Кăвак Ентрейпе Тикка туйне Кутермерĕн çитес çук. Çапла мари, кӳршĕсем? Пирĕн туй ђаплă—хĕрĕ çемĕн кађђи, хăни çемĕн ĕçки. Ташлăр, йурлăр! (*Ташлаççĕ, ĕçтерме тытăнат*).

М у р с а й. Туй савăнăçлăрах пулма, Ваçça пиђђе, есĕ пĕрре тĕлĕнтерсе сиксе кăтартмăнши? Туй халăхĕ ĕмĕр асăнтăр.

В а ç ç а п и ђ ђ е. Ой, пуласт пулĕ, ватăлнă ĕнтĕ, йăванса кайăп.

М у р с а й. Ей, хаљ, Ваҫҫа пиђђе, есĕ ђилайĕшне ҫамрӑксене те ђике тӑршшĕ лартатӑн! Ҫапла мари, тӑвансем?

П у р т е. Ҫапла пулмасӑр! Ара, ҫаплах, ҫаплах! Ҫамрӑк кин йађĕпе ташласах пулат̆.

В а ҫ ҫ а п и ђ ђ е. Мĕн пулсан, мĕн килет, ырӑ ҫынсен кӑмӑлне тӑвасах пулат̆. Карђӑк, кил иккĕн ташлар. (*Сӑхсӑхса ташла пуҫлаҫҫĕ, пурте алҫупаҫҫĕ*).

В а ҫ ҫ а п и ђ ђ е (*пĕтерсен*). Ну, пирĕн ҫитрĕ ĕнтĕ, ытлашши те пулђĕ пуљ темĕн, ĕҫес килсех кайрĕ. (*Ĕҫеҫҫĕ, йурлаҫҫĕ*).

Е р х и п. Мурсай, килха кунта. (*Мурсай пырат̆, ўсĕр, ӑна вӑрттӑн калат̆*). Ку тен тухса тарма та шут тытĕ. Ҫавӑнпа лашасене хатĕр тӑратсан та йурат кĕҫĕрлĕхе.

М у р с а й. Ей, ӑҫта тартӑр вӑл! Кутемертен хӑй килђĕ, урӑх ниҫта та тарас ҫук.

Е р х и п. Тепĕр тесен, туй салансан, ӑна пӑртак вĕрентме те пулат̆ҫке, пушӑ алӑрах!

Т и к к а (*сĕнĕ ерех ĕҫтерет*). Мурсай, килха, сып, санран пуҫлар. (*Мурсай ĕҫет*).

М у р с а й. Ай-ай-ай! Вĕлерекенни пуљ ку сан!

Т и к к а. Ҫук, ўсĕртекенни ҫех, хамӑр йухтарни. Виҫĕ хут йухтартӑмӑр, ђĕртсессĕн симĕсĕн-кӑвакӑн йалкӑшса ҫунат̆. Килха, тепĕр иккĕшне йӑвантар: тур калаш—виҫҫĕ, теҫҫĕ.

М у р с а й. Ой, пулаймаст̆! Хаљ те пĕтĕм пыра ҫунтарса анса кайрĕ.

Т и к к а. Ҫук ĕнтĕ, ĕҫес пулат̆, апла Ерхипе хисеплеменни пулат̆. Ку ĕҫни кил хуҫишĕн пултӑр, ... ӑлӑмшӑн ĕҫес пулат̆. (*Леш ĕҫет*).

Мурсай. Ну, Тикка пиђђе, пĕтертĕн ес мана, тем куçра та шуйттан мăйракисем курăна пуçларĕç. Йурлас пуљ пĕрех хутђен хĕрарăмсемпе пĕрле.

(*Вĕсем патне пырса ларса йурлат, ђилайтан кайран йăванса çывăрсах кайат. Çĕнĕрен ташă пуçланат, ваттисем ўсĕрĕлсе пĕтнĕ. Çамрăксем ташлаççĕ. Пуса катђи ташланă ђух виçĕ хут сĕтел хушшине пыра-пыра пĕркентђĕке хĕр çинтђен туртса антарат, вара ăна пытарма тухса вĕçет, хăшĕ хăшĕ ун хыççăн ђупаççĕ. Пăртак тăрсан кĕрсе туй халăхне çăнăхпа сапат. Мурсай çывăрса кайнине курса, ăна сапса шуратсах йарат. Пурте кулаççĕ, леш вăранат*)

Тикка. Ара, Мурсай, çуллах йур айне пултăни? Хут ташласа силлен пăртак.

Мурсай. Ђăнахи? Кам мана ун пекех мăшкăланă, йе! Пуса катђи пуљха? Ак хуна хăрăмпа куратса йарам, ăçтаха? (*Хăвалат, кăмака патне пырса хăрăм илет, леш тарат*). Тытăр ăна, тытăр! (*Пурте кулаççĕ, пуса катђи тата питĕнтђен çăнăхпа сапат, леш йăлтах сура-сура хупланат*). Кăравул! Пĕтерђĕ, куççăр хăварђĕ!

Тикка. Ђим, Мурсай, ак кунта çумалли пур, çуха...

Мурсай. Ăçта, курмастăп нимĕн те...

Пуса катђи. Ес куçна хуп, çăварна кар.

Мурсай. Çапла, тата сапас тетĕн пуљ, хуна сапса йарамха...

Тикка. Меха, Мурсай, çăварта çăнăх ђусталанса карĕ пуљ, çуса йар (*ĕçтерет*).

Мурсай. Тавай купăс! Неђђăвă лараххăт Пљассоват тăк, пљассоват! Аљи песнĕ пет (*йурлат*)

Йеххăлçă йармăрккă суккăр купетс, суккăр купетс —утайман молотетс. (*Купăс ташламалли кĕвĕ калать, ташлать*). И-их! Ампăрлинт тӳ-тӳ ӳ!..

(*Урамран салтак ађисен йурри илтĕнет, Лисук итлесе кантăкалла çавăрăнса пăхать, Ерхип ăна сисет*).

Л и с у к. А! Салтак ађисем! Пайан вĕсем Шупашкара кайаççĕ, макраççĕ, епĕр туй тăватпăр!

Е р х и п. Ну, ну мĕн есĕ тата салтак ађисемпе Шупашкара кайас теместĕни? Ĕçтер туй халăхне, пĕркенђĕк айĕнђен тухнă ĕнтĕ, арăм пулнă! Тыт сăра курки.

А м ă ш ĕ (*курка тыттарать*). Кин, ĕçтер, ĕçтер сăрине, хăйуллăрах пул, апла хăтлани аван мар: кинĕ йулхав, хăй ĕçне пĕлмест, тийĕç.

Л и с у к (*ирĕксĕр куркине тытса, сăра тултарать, салтак ађисем çывăхараççĕ*). Ђĕре ырра сисмест! Вĕсем кунта кĕреççĕ, çывăхараççĕ! (*алăк çинелле пăхать*).

Е р х и п. Ку мĕне пĕлтерет, йурласа пӳрте кĕреççĕ. (*Ђупса хирĕç тухать. Алăк патĕнђе вĕсене тĕл пулать те, ађисене паллаcа кайалла ђакатлешсем йурлаççĕ*).

### 2-мĕш курăнни.

*Арттеми, салтак ађисем, вара Валькка кĕрет*.

Т и к к а. Килĕрехха, килĕрех, кайиђђен Ерхипе хисен туса хăварас терĕр пулаť. Аван, аван... ларăрха, вырнаçăр!

А р т т е м и. Çук, Тикка пиђђе! Епĕр вилес умĕн Ерхиппе татăлас, тесе килтĕмĕр! (*Ерхипе*)

Ей, хăравçă! Салтакран йултăн та, авланас терĕни. А? Аван! Анђах туйне тума урăх вăхăт тупмаллађђĕ, пайан мар! (*Салтак ађисем пурте кулаççĕ*).

Мурсай (*ўсĕр*). А-а! Еп сана палларăм! Есĕçке вăл мана Кушарта ĕнсерен парса асамат кĕперри кăтартнăђђĕ (*тĕллесе кăтартать*). Ерхип, пар вĕсене ĕнсерен пĕрер, кайђђăр хăйсен çулĕпе!

Арттеми (*Мурсайа ĕнсерен парса йăвантарса йарать*). Пире мар вăл ĕнсерен парасси! Тепĕрине есĕр парăттăр та, анђах пире мар. Пирĕн ђăмăрсем сирĕннинђен нађар мар. (*Мурсай хăраса сĕтел айне кĕрсе кайать*).

Ерхип (*çиленсе*). Есĕр кайас умĕн ман туйа пăсас терĕре! Кунта кĕрсе ман хăнасене хĕнесе хăварас терĕре? Çук! Еп хам кўршĕсене пусмăрлама памастăп! Пуçăрсене хĕрхенетĕр пулсан, тасалăр кунтан! (*Алăк çинелле кăтартать, салтак ађисем кулаççĕ*).

Арттеми. Ытла ђас хăвалатăнçке. Пăртак салтак ађисене çитерсе те йарасшăн мариха есĕ? Ха-ха-ха! Вĕсем саншăн вилме кайаççĕ, ес çапах кăна тăвасшăн мар! (*Кулать, Вађкка кĕрет*). Вађкка, кайа пултăн, пире туйран хăвалаççĕ!

Лисук. Вађкка! (*Ун патне куççулĕпе тућса ырать*). Вађкка, kaçар мана.

Вађкка (*ăна Ерхип патне тĕртсе йарса*). Кай, сĕтĕрĕнђĕк! Ан çыпăç ман çума! Ытала пуйан упăшкуна!

Лисук. Вађкка!.. (*хыттăн йĕрет*). Мĕншĕн апла калатăн?

В а љ к к а. Çитет, санпа епĕр татăлнă, хаљ упăшку çинђе ђерет. Ей, Архип Тиххăнђ! Хĕре манран туртса илтĕн, тавтапуç та темерĕнçке? Йе пуйан çын ађине пурте килĕшети?

Е р х и п. Ех, çара çерçи! Кĕрсе хăратса хăварас терĕн пуљ? Есĕ мар вăл мана хăратасси. Куркаланăçке нумай сирĕн пек çӳрмесене! Хăй çапах хĕр вăрлама шут тытнă. Вăрлас пулсан, вăрлама пĕлес пулаŤ!

В а љ к к а. Епĕ нихăçан та никамăнне те нимĕн те вăрламан! Хĕр мар, еп шăрпăк та çынăнне тивмен! Епĕ ђухăн, анђах манăн хама пурăнма çителĕклĕ! Вăрласа пуйса туни ман пĕр йапала та çук! Атте манăн халђђен ĕçре, епĕ те тар йухтарса, кĕкĕрт йӳççине шăршласа хăмла савăтĕнђе ĕçлетĕп! Хуçасем мĕнле пуйнине таса куратăп та, анђах шăла çыртса иртерес пулаŤ. Тĕнђе суйа ĕçпе нумай пурăнас çук! Хаљ епĕр сирĕншĕн вăрçса, хамăр йун айне пулса вилетпĕр. Анђах сирĕн те шăпа тухасси айакрах мар пуљха. Ун ђухне вара урăхла калаçăпăр!

Е р х и п. Ытла çуллă ђĕлхепе калаçатăнçке çак есĕ. Тен Хури патне Çĕпĕре кайса ларас теместĕнши? Ха-ха-ха! Хĕр вăрри!

Л и с у к (*хирĕç тăрса*). Ерхип! Ес Ваљккана апла калама пултараймастăн! Мана никам та вăрламан: хам ирĕкпе епĕ хам тухса кайнă! Кутемертен есĕр мана хăратса, пуçа çавăрса илсе килтĕр! Илсе килсен, атте-анне мана укçалла сутса йађĕç.

Ерхип. Ђаран, им-йум хĕрарăмĕ? Кăна пĕлнĕ пулсан, сирĕн пата ура та йарса пусмастăм! Анђах пĕр шухăшлана ĕçе епĕ калламалла тумастăп! (*Салтак атђисене*). Ей, Кутемер хурђĕсем! Авă сирĕн ваљђи алăк, пуç çине çĕлĕк—марш! Çулĕ такăр пултăр! (*тĕллесе кăтартат*).

Арттеми. Йулташсем! Мĕн унпа нумай йумахласси! Пĕтрес те, пăрахас: пирĕн пурĕ пĕр вилес пулать! Ей, Ваљкка, тавăр ђавсуна!

Ыттисем. Тĕрĕс! Ур-ра! (*Пўртри çынсем хăраса ўкнĕ, хăшĕ тараççĕ, Ваљкка йулташĕсене тђарат*).

Ваљкка. Тăрăр, йулташсем! Епĕ унпа пĕђђенех татăлатăп.

Ерхип (*кĕсйинтђен пăшал кăларса*). А! Есĕр аплаи? Ха-ха-ха! Ну, хăшĕ малтан пуçлас тет? (*Лешсем тђакаççĕ, Ваљккана тĕллесе*). Ей, хĕрлĕ хурт, хăрарăна?

Мурсай (*сĕтел айĕнтђен тапаланса тухат*). О-хо-хо-хо! Ампăрлинт! (*Ваљкка патне пырса*). Ытла ђас пĕтресшĕн есĕ Ерхипе? Хама вĕлереççĕ пуљ тесе сехĕр хăпсах тухнăђђĕ! Тин ассăн сывласа йатăм. Ну, кайăр, кайăр! Неђђăвă туйа ђарса тăраххăт, таси паха! (*Алăк уçма пит вашнă кайат*).

Арттеми (*ăна хыçалтан тапса сирпĕтсе кăларса йарат*). Тĕрĕс, таси паха, пўрт илемне йарса çўретĕн. (*Леш тулта çухăрат*).

Тикка. Ерхип, апла хăтланса ырри пулмĕ, ђипер килнĕ çынсем ђиперех кайђђăр.

Ерхип. Атте, сан ĕç çук унта! (*Салтак атђисене*). Ей! мĕн ђарăнса тăтăр тата?

Ваҫкка. Ёçе пĕтерес тесен, Ерхип, йе санăн мана вĕлерес пулаť, йе еп сан пуçна çапса салатăп! Пуйанпа ҫухăн хушшинҫе пĕрлешӳ пулас çук! Суйла ҫасрах аллунта пăшал пур ҫухне: хăшĕ сана лайăхрах.

Лисук (*мала тухса*). Çук! Ёçе пĕтерме ман йун кирлĕ! Ерхип, сана епĕ йуратмастăп, йуратман та, йуратас та çук! Çавăнпа ес мана хаҫ вĕлермесен, сана епĕ хăçан та пулсан хамах вĕлеретĕп: пĕрĕç пĕттĕр!

Ерхип (*усаллăн кулаť*). Хе-хе-хе! Сана персе алла та варламастăп! (*Пăшалне айалалла антараť. Лисук çав вăхăтра ăна йарса илеť*).

Лисук. Апла пулсан ан тытса тăр пăшална! (*Тĕпĕртетнĕ ҫух пăшалĕ сасартăк шатлатаť*). Ах! (*Хытă хăранипе Лисук çав вăхăтра çухăрса йараť. Çынсем туха-туха тараççĕ. Салтак аҫисем Лисука хупăрласа илнĕ, леш антраса ӳкеť. Ерхип çав вăхăтра хăйçуттине сӳнтерсе тухса тараť, сҫенă çинҫе тĕттĕм. Мурҫай кăмака çине улăхса пытанаť*).

Арттеми. Тытăр ăна, тытăр!

Ваҫкка. Çутăр ҫасрах! Камăн шăрпăк пур? (*Шĕри çутаť, пӳртрен пурте тухса кайса пĕтнĕ. Салтак аҫисем ҫупаççĕ*).

Арттеми. Аха! Тухса тарнă, йураť тарма аса илнĕ!

Ваҫкка. Лисук, ăçтан амантнă сана?

Лисук. Епĕ питĕ хăрарăм. (*Тăратаççĕ, лартаççĕ, пăхаççĕ*).

Ваҍкка. Сана ниҫтан та лекмен!

Лисук. Пўртрен пурте тарса пӗтнӗ мӗн. Ваҍкка, сирӗнваскас пулаӑ, кайӑр.

Арттеми. Ваҍкка, епӗ лашана тухса ҫаврамха, ыттисем те хатӗрленҍҍӗр. Сире Лисукпа иксӗре хам лаша ҫине лартатӑп, ман лайӑхрах ҍупаӑ.

Лисук. Вара есӗр мана Шупашкарах илсе кайас тетӗре? Ҫук, Арттеми, еп сирӗнпе пымастӑп

Арттеми. Кирек ӑҫта пултӑр, анҍах кунта хӑвармастпӑр. Хӑвӑн калла Кутемере пырас шухӑш пур пулсан, кайса леҫетпӗр. Ну, ӑҫта кайассине ҫул ҫинҍе те шухӑшлӑпӑр, хаҍ васкас пулаӑ (*кайаӑ*).

Лисук. Ваҍкка, хаҍ те есӗ мана ҫиленетӗнши? Каҫар мана ӗлӗкхишӗн?

Ваҍкка. Ӗлӗкхине асӑнакана куҫне ҍавнӑ, теҫҫӗ.

Лисук. Ваҍкка, мӗн калатӑп есӗ? Ах, есӗ пӗлесҍӗ: мӗн ҍухлӗ куҫҫулӗ йухтартӑмши епӗ кайран, сана пӑрахса килсен. Пӗрех-хутҍен хамахам пӗтерес тесе те шухӑшланӑҍҍӗ, анҍах вӑйӑм ҫитмерӗ (*йӗрет*). Ваҍкка, каҫар мана тархасшӑн!

Ваҍкка. Ҫитӗ, Лисук! Ун ҫинҍен кайран калаҫӑпӑр, хаҍ ҫул ҫине хатӗрлен.

**3-мӗш курӑнни.**

*Арттемипе йулташӗсем кӗреҫҫӗ.*

Арттеми (*унпа пӗрле купӑҫҫӑ, тата ик-виҫ салтак атҍи кӗреҫҫӗ*). Ну, лашасене ҫаварнӑ. Хӑвалатпӑр, никам ан систӗр... Ку пӑшалне, Ваҍкка, ҍиктен кирлӗ пулӗ... Лисук, есӗ хатӗри?

Л и с у к. Ман мĕн хатĕрри, хушпу илес пуђнех (*тђĕркет*). Вађкка, ман пуҫа пĕр шухăш килсе кĕђĕ: мана ҫак туйа пуҫлиђђен темиҫе хут та аппа хăй патне пурăнма ђĕннĕђђĕ. Аҫусем парасшăн пулсан та, Ерхипе ан кайах тетђĕ. Хађ еп сирĕнпе улăха ҫитиђђен ларса пыратăп та, унтан утатăп ҫуран...

В а ђ к к а. Йурĕ еппин.

А р т т е м и. Апла пулсан, вĕҫер хăвăртрах!

Л и с у к. Унта ҫынсем кураҫҫĕҫке ĕнтĕ.

А р т т е м и. Курĕҫин! Вĕсем хăраса ҫухрăмран ҫех пăхса тăраҫҫĕ. Камран хăрас пирĕн? Пăшал пур! Йурра йарас мари? Пуҫла, Михађа! (*Салтак йурри йурласа тухса кайаҫҫĕ*).

## 4-мĕш курăнни.

*Ерхип усаллăн ахăлтатса кĕрет.*

Е р х и п. Ха-ха-ха! Хăтăлтăмăр терĕр пуђ? Ҫук! Ман таварасси вăхăт иртменха! Хĕрĕ мана кирлĕ мар. Анђах ку мăшкăла тӳсме пултараймастăп! Пĕр пăшала илсе кайнă пулсан, ман тепĕр те пур! (*Пĕрене ҫумĕнтђи пысăк пăшалне илет*). Хуса ҫитме сĕлĕ лаши пур! Тикка Ерхип камне ҫур сехетрен пĕлĕрха! (*Хыпаланса тђупса кайма тăрат*).

М у р с а й (*кăмака ҫинтђе*). Ађ-ђхи!

Е р х и п. Кам унта?

М у р с а й (*пуҫне кăтартса*). Епĕ, ађ-ху!

Е р х и п. Мурсай... Ха-ха-ха! (*Иккĕш те ахăлтатаҫҫĕ*). Мĕн шырама улăхса ларнă ес унта?

М у р с а й. Ађ-ху! хăйамат!.. Кунта сан тапак йешђĕкĕнђе мих выртать (*урайне ывăтать*), еп

вĕлересрен хăраса унпа витĕнсе выртрăм та, аран тўсрĕм. Ађ-ху! Вĕлерет ађхулаттарса!.., Пултаратăн та мĕн есĕ! Манран пулаймастђĕ ĕнтĕ хăй сўнтерсе тухса тарасси.

Е р х и п. Ну, çитет! Ăçта карĕç вĕсем, ес илтрĕн пуљ...

М у р с а й. Илтмесĕр... Лешне, санне, Ђĕнкасси улăхне ăсатса хăварас терĕç, унтан...

Е р х и п. Ыттине çул çинђе калăн... Ата! (*Кайас умĕн*). Патронсем ман лере, тĕлне пĕлен, пĕр вуннăшне ђик, пĕр мих ил! Еп лашана тухса кўлемха!

М у р с а й. Патрун (*кăмака çинђен анат*), Мих... Ађ-ху! Вот те туй... Патронне илĕп, миххи мĕн тумаши кăна? Сĕлĕ хума пулсан, çак мих те йурат пуљ. (*Сĕтел патне пырса, сапна-сапна атђхулатса, сăра ĕçет, вара çак сăмахсемпе тухса кайат*). Ну и ну! Пĕлтĕр лаша вăррипе лекнĕђђĕ, унтан та иртерет ку пайан! (*Кайат*).

*Ђаршав.*

---

## IV-мӗш пайӗ.

### 1-мӗш карттин.

*Малтанхи теккаратси. Сӑртра йал, айаккинђе катасем. Каҫхине. Хыҫалта выртма ађисем вут ҫунтараҫҫӗ. Хӑшӗ ҫывӑрса кайнӑ, хӑшӗ лараҫҫӗ. Пӗр йенђе ватӑраххисем аҫам пӗркенсе выртнӑ, тепӗр йенђе ађасем йарт-йартла выљаҫҫӗ. Айакран вӑйӑ йуррисем илтӗнеҫҫӗ. Сайра хутра вӑрӑм ђӑпӑркка сӑсси, лашасене хӑвалани илтӗнет.*

### 1-мӗш курӑнни.

*Стђенӑ уҫӑлнӑ ђух ҫапла йурласа выљаҫҫӗ.**) *Йа̀-йа̀рт йа̀пӑрти, ҫурӑм тӑрӑх йа̀рарха: (икӗ хут). Ђӑкӑт тути калати те, салат тути калати? (икӗ хут).*

### 2-мӗш курӑнни.

*Вут ђӗртнӗ ҫӗре кӗтӳҫ кӗрет. Ӑна курса пурте вут патне ђупса пыраҫҫӗ. Пурте сӑрса илсе кӑшкӑраҫҫӗ: Маркки пиђђе, йумах йарса кӑтартха пире! теҫҫӗ.*

Маркки пиђђе. Йумах?.. Апла-капла йумах-сӑмах пӗлместӗп епӗ.

---

*) Вӑй йе ак ҫапла: ађапӑђасем пуҫтарӑнса пӗр ҫавра пулса ларнӑ, урисене сӑхмансемпе витнӗ. Сӑхмансем айӗнђен ђӗн пиҫихэхи ҫӳретеҫҫӗ. Ҫав пиҫҫихине варӗнђе лараканӗ куҫса тытса илме тӑрӑшат́. Лараканӗсем сисиђђен варӗнђине ҫурӑмран пиҫиххиэц йурла-йурла ҫапаҫҫӗ.

Пурте. Каласа кăтарт ĕнтĕ, мĕн хытса тăратăн.

Маркки пиђђе. Камăн килте турани пур, пĕр ђĕлĕмлĕх парăр—вара мĕн пулаť. (*Пурте тапак йентђĕкĕсемпе ђунса пыраççĕ*). Хăшĕнне илемши? (*Кашнин йентђĕкĕнтђен иле-иле ђĕлĕмне тултарат*). Ну, еппин пĕр-ик сăмак суйса парас пуђ. Хулхасене ђанк тăратăр, çăварсене карăр, куççене хупăр, кăварне ан сўнтерĕр. Ну, мĕн пулсан мĕн килет, пуçлар пуђ... (*Халап калама пуçлат, ађасем кула-кула итлеççĕ*).

Ак ĕнтĕ, ађасем, хăвăр та пĕлетĕр пулĕ: ĕлĕк авал, асаттесем çуралиђђен, епĕ питĕ пуйан пурăнаттăм: карта тулли выђăх-ђĕрлĕхђĕ, кĕлет тулли тырпулђђĕ—пĕр сăмахпа каласан, таврара пĕр пуйан, темелле.

Пĕрре, пайанхи пек, епĕр выртма карăмăр. Выртмаран ирхине киле таврăнмалла ĕнтĕ. Лашана тытатăп та, утланмалли вырăн шыратăп. Лаши манăн асарписер пысăкђĕ! Мĕн пысăкĕш темеллеши ĕнтĕ?.. Çак каскаран ђылай пысăк ĕнтĕ, сурăхран пĕђĕкех те мар пулĕ (*кулаççĕ*). Ман йулташсем лашисем çине утланђĕç те, вĕçтерђĕç килелле. Епĕ утланаймасăр шалт хăшкăлтăм: çĕртен сикетĕп—урлă касса кайатăп, йăвăç тункатисем çине тăрса сиксе утланма хăтланатăп—лашан хырăмĕ айне те сиксе çитейместĕп (*кулаççĕ*). Мĕнле утланас?

Шухăшларăм, шухăшларăм та, йăвăç тăрĕнђен сиксе ларас пулĕ, терĕм. Лашана кăкаратăп та, йăвăç тăрне вăшваштах хăпарса улăхса тăратăп.

Лаша çине тата утланса лармалла мар. Лапђанса-а лартăм та, йаккăлт сикрĕм. Йăвăç тăрри еп лапђăннипе авăнса-а карĕ те, вĕлт çех сирпĕтсе йађĕ мана çӳлелле. Пĕтрĕм ĕнтĕ, тесе шухăшлатăп, ла-шаран таçта хăйамата çӳле сирпĕнсе карăм. Пăха-тăп—шур пĕлĕтсем хушшинђен вăшинк сирпĕнсе тухса карăм та, пĕр кăвак пĕлĕт çине пытăм хĕ-сĕнтĕм: шăпах турă анкартйне пырса ӳкнĕ мĕн епĕ, Турă пăрçа çапнă та, сухалĕсене йакаткаласа, пăр-çа сăвăрма çил вĕрессе кĕтсе тăраť. Пăрçине тă-раниђђен çирĕм те, турăран ыйтатăп: Ей, турăçăм. пӳлĕхçĕм! Мĕнле манăн çĕр çине анасши тетĕп. Турă калаť: Ме, тет– пăрçа улăмне парам сана, йава-йава анса кай, тет.

Пĕр пĕлĕтрен пăрçа кантрине çаклататăп та, йава-йава анатăп. Çĕр çине çитесси нумайах та йулманђђĕ, пăрçа улăмĕ пĕтрĕ тухрĕ. Мĕн тăвас Ђипер, çил вĕрнĕ майĕпе, сулланкаласа тăраттăм, ман пăрçа кантри, пĕр пĕлĕт пырса çапăннипе татăлђĕ карĕ. Ну, хайхи вĕçсе анатăп. Пĕтрĕм ĕнтĕ, тетĕп. Йураť, еп ӳкес тĕлте пĕр пысăк лађака пулнă. Вирлĕн сирпĕнсе аннипе лађакана л-лађ! ӳкрĕм те, мăй таран путах лартăм. Нийепле те тухмалла мар.

Пĕр кайăккăвакаљ мана курнă та, ћартлатса пыраť хирĕç. Мĕн тăваť ку? тетĕп. Вăл ман пуç тăрĕнђе йава тума шухăшланă мĕн (*кулаççĕ*). Йă-вине турĕ те, çăмарта тума тытăнђĕ. Тунăçемĕн миçе çăмарта тунине шутласа выратăп: шăп хĕрĕх çăмарта турĕ канаљйĕ! (*кулаççĕ*). Хĕрĕх çăмартаран

вăтăр тăххăрĕш ђиперех тухрĕç, пĕри тăрă пулђĕ. Шинн-шинк-шини теççĕ ман пуç тăрĕнђе. Вĕсен сассине кашкăр илтнĕ те, шăшлакаласа ман патмалла пырать. Вăл кăвакал ђĕпписене çиесшĕн пулнă мĕн. Кăп-кап хыпрĕ те, кăвакал ђĕпписене çисе те йађĕ. Хайхи епĕ: Рр-рйах!!—тесе питĕ хытă кăшкăртăм та, кашкăра хўринђен йарса илтĕм. Кашкăр хăранипе çил пек вĕçтере пуçларĕ. Еп çапах хўринђен çакланса кўлĕ хĕрне çитиђђен çапкаланса пытăм. Вара алла вĕçертрĕм те, выртса йултăм.

Ăçталла утасши ĕнтĕ, тесе шухăшлатăп. Хырăм та выçă, хам та пылђăклă.

Курах карăм—вăрман. Утас, терĕм, çавăнта. Вăрманта пĕр йăвăç хăвăлне шăнкăрђ йăва тунă. Алла ђиксе пăхатăп—ал кĕмест; пуçа ђикетĕп—пуç кĕрет (*кулаççĕ*). Кĕр те кай хайхи çав хăвăла. Хырăм выçнă майĕпе, ним тути-масине пĕлмесĕрех, шăнкăрђ ђĕпписене çирĕм те йатăм.

Калла тухма тăратăп—тухаймастăп та. Нумай çинипе хырăм ўснĕ кайнă. Ак йапала, пĕтрĕм вĕт, тухаймастăп вĕт еп кунтан! тетĕп. Шухăшласан, шухăшласан аса илех карăм: ара ман лупасайĕнђе çĕн пуртă пурђђĕçке, тетĕп. Хăвăртрах килтен пуртă ђупса кайса илетĕп те, пуçлатăп йăвăçа касма. Кассан, кассан леш йăвăç хăвăлĕнђен, хам та сисмерĕм, панкăлт тухса ўке патăм. Çапла вара хăтăлтăм.

Çавăнтан кайран киле килтĕм те, шухăшлатăп. А çак инкеке еп пуйан пирки куртăмçке, тетĕп.

Пуйан пулмасан, асарписер лаши те пулмасђĕ, асапне те курас çукђĕ, тетĕп. Пайан кунтан никама та ман йăхра пуйан пулма тур ан çыртăрах, тетĕп. Кĕтўçрех аван: ăна йалта выљăхĕ те, халăхĕ те хисеплет, хырăм та тутă. Пуйан пулса пуçа пĕтересси те инçе марђђĕ, йурат̆ турӑ пăрçа улăм пађĕ те, лађакана ўксе аманмалла пулмарĕ. Халĕ те сывах пурăнатăпха.

А ђ а с е м. Тата каласа парха, Маркки пиђђе.

М а р к к и  п и ђ ђ е. Тата-и? Пулнă, тет, пĕр карђăкпа пĕр старик. Çавсем пўрт тума шухăшланă, тет. Старикки калат̆, тет: карђăк, тесе калат̆ тет,—кайса пуçтарха пĕр пўртлĕх шăмă, лартарха пĕр ђаплă тăмă çурт,—тесе калат̆, тет. Хăйсен халђ йăвăç çурђĕ те пулман, тет. Карђăк пĕтĕм тĕнђери шăмма пуçтарђĕ, тет те, каткана шўтерме лартрĕ, тет. Халђ те çав шăмă шĕвет, тетха.

А ђ а с е м. Вара!.. Малалла мĕн?...

М а р к к и  п и ђ ђ е. Вара-и? Вара тем пулат̆ха, шăмми шўмесĕр пĕлме çук: те лартайĕç пўртне, те лартаймĕç—унђђен халапĕ те пуçланаймаст̆. Шўсе çитсен, каласа парăп.

А ђ а с е м (*кулаççĕ*). Ес, Маркки пиђђе, урăххи... вăрăмраххи каласа кăтарт!

М а р к к и  п и ђ ђ е. Çук, çук! Ыттине ыран калăпăр, лашасене кайса пăхамха: ку ђухне шанмалла мар, кĕтўренех вăрлаççĕ.

А ђ а с е м. Хамăр хурал тăратпăр, Маркки пиђђе, каласа кăтартха тата?

Маркки пиђђе. Ой, сире, ађапăђасене шансан, çири йĕме хывса илсе кайнине те сисмĕн. (*Ђĕлĕмне паккаса, мăкăртатса кайат*).

Пĕри. Ей, ађасем, тавай Мируна шыва кайса йаратпăр, ытла шапа пек хартлатса çывăрать. Трапхин, илсе кил йĕвен. (*Трапхин илсе килет, Мируна уринтђен çыхса, сĕтĕрсе илсе кайаççĕ, леш кăшкăрать, кулаççĕ; пăртак тăрсан, Мирун силленсе кĕрет*).

Ађасем (*харăс кăшкăраççĕ*). Хĕртсе хĕвел пăхнă ђух, Мирун ури йĕп йĕпе!... Ха-ха-ха!

Мирун (*кăвар патне пырса туттирне типĕтет*). Ну, ну, ђим! Кам мана мăшкăланине пĕлетĕпха, хăйне тепĕр ђухне кайса йарам (*кулаççĕ*).

(*Айакран салтак йурри çывăхарни илтĕнет*).

Пĕри. Ей, салтак ађисем йурлаççĕ. Атăр, кам пырать кĕпер патне! Кайса пăхар!..

Трапхин. Ђĕнерсем, йе Кутемерсем саттунтан прахутпа кайаççĕ пулмалла.

(*Пурте тђупаççĕ, Мирун типĕтсе тăрать. Трапхин выртса йулать*).

### 3-мĕш курăнни.

Мирун (*хăй тĕллĕн*). Шуйттан кипенкисем! Йатне тусан та йуратђĕ, шывах ђăмтарђĕç. Капла мана персуткă та лекме пултарать.

### 4-мĕш курăнни.

*Маркки питђе, Мирун, выртакансем.*

Маркки пиђђе (*кĕрет*). Е-ей, Мирун! Апла хăтланни килĕшети? Хĕрсем курсан мĕн калĕç?

Ђараксăр, тейĕç! Авланас, тет, çытмине йĕпетсе выртатˇ!

Т р а п х и н. Мирун! Апла сан арăмун кашни кун çĕнĕ кĕпейĕм хатĕрлес пулатˇ.

М а р к к и п и ђ ђ е. Хатĕрлесен йуратˇ те-ха, çук пулсан, мĕн тăвас. Йумахра калакан йĕмсĕр хусах пек пулас пулатˇ вара! Хе-хе-хе!

Т р а п х и н. Апла пулсан, Мирун, сан кĕпейĕм праçниксем ђух çех тăхăнас пулатˇ.

М и р у н. Ан лĕпĕртетсе выртха ес унта! Сана хăна кайса йарасђĕ.

М а р к к и п и ђ ђ е. Ăçта йамалла тата?

Т р а п х и н. Ăна ађасем Енĕше кайса пулă йашки çитерђĕç!

М а р к к и п и ђ ђ е. Е-е! Ав мĕн! Еп, анкăминкĕ арçурирен хăранипе Мирунăн ђаракĕ пăсăлнă, те, се... Апла пулсан, иртсе кайĕха... Типĕтех, Мирун-Кашта туса парас мари? (*кулаççĕ*).

М и р у н. Каштасăр та лайăх типет, Маркки пиђђе.

М а р к к и п и ђ ђ е. Типсен йуратˇ те, пĕçерттерсе ан йар.

Т р а п х и н. Вара ђăнахах хайхи, Мриллă, Мриллă, симĕс кут, тейе пуçлĕç! (*кулаççĕ*). Мĕн, ку салтак ађисем кунга килеççĕи? (*тăрса хирĕç кайатˇ*).

**5-мĕш курăнни.**

*Салтак ађисем: Ваљкка, Арттеми, Лисук, тата ыттисем йурласах кĕреççĕ.*

А р т т е м и. О-о! Есĕр кунта вут та ђĕртнĕçке!

Маркки пиђђе. Кунта пёри пирён шыва кайнă таха, ăна типётме вутă ђёртрёмёр.

Арттеми. Мёнле апла? (*тёлёнсе*).

Маркки пиђђе. Темёнскерле ăйăх тёлёшпе (*атђапăтђасем ахăлтатаççё*) аташса мари. Ађи çавăн пекрехскер те.

Мирун. Мăшкăласа калаť вăл. Мана, çывăраканскере, ураран кăкарса шыва кайса йађёç имйумсем! (*пурте кулаççё*).

Маркки пиђђе. Мирун, хёртен вăтанасђё хуť, ун умёнђех типётсе тăран.

Мирун. Типнё ман, Маркки пиђђе, мён мăшкăлатăн çакă! (*кулаççё*).

Маркки пиђђе. Типеймен пуљ теха, мён тăвас тен (*айакри вăйă йурри илтёнет*).

Артеми. Вăйă сасси мари çав! Хаљ те вăйă саланмани?

Трапхин. И-и! Пирён вăйă вăл шурăмпуç çути ўкиђђен çаплах çёмёрлет! Кайса курас темесре?

Арттеми. Йулташсем, аťăр кайса выљђар пёр йулашки çёр. Прахут ирхине ирех пулмасť вёт, çитёпёрха.

Михаља. Ваљкка, Лисук, кайари? Лашасене кунтах хăварар, ут кётўçёсем унђђен астăвёç.

Маркки пиђђе. Астăвăпăрçке, астăвăпăр Мирунпа. Кайăр, пăртак савăнăр, тен хăшне йуратса та пăрахăр, салтакран çыру та çырмалла пулё... Каймасан йурамасť, вёсем те савăнёç... Лашисене хамăр астăвăпăрçке, есёр килиђђен тăварса кантарсан та йураť, улăхра апат нумай... Еп лашисене

аставăп. Мирун ĕнтĕ вăйинех кайаймĕ, хĕрсене йĕпетсе пĕтерĕ... (*кулаççĕ*).

М и р у н. Маркки пиђђе, мĕн пит намăслантаратăн вара есĕ мана? Такçанах типнĕ ман!

М а р к к и п и ђ ђ е. Типмен пуђ теха! Ну, йурĕçке, кайах еппин ес те, тен Мавра çумĕнђе тăрсан типĕ (*кулаççĕ*).

В а ђ к к а. Лисук, кайса килери?

Л и с у к. Çук, Вађкка, каймасан авантарах пулмĕши? Унта паллакансем те нумай, ытлашши ђĕлхесем те тупăнĕç.

В а ђ к к а. Арттеми, есĕр кайăр. Лашасене астума епĕр йулăпăр. Лисукăн, ху та пĕлетĕн, кайасах килмест.

А р т т е м и. Ну, йурĕ... Епĕр нумай тăмастпăр... Михађа, пуçла купăса! Салтак йуррине пурте хисеплеççĕ! (*йурласа кайаççĕ*).

## 6-мĕш курăнни.

*Вађкапа Лисук вут пăтне лараççĕ. Маркки пиђђе те унтах.*

М а р к к и п и ђ ђ е. Хăш йалсем пулатăр çак есĕр? Еп ђухлаймарăм.

В а ђ к к а. Кутемерсем.

М а р к к и п и ђ ђ е. Е-е! Кутемерсем... Кам ађиха ес Кутемерте?

В а ђ к к а. Уйрикасри Хвеђука пĕлетĕне? Çавăн ађи.

М а р к к и п и ђ ђ е. Ой, ара пĕлмесĕр Хвеђука. Аму сан апла Кушмара йалĕнђен пулађçкеха? Еп

туйёнђе хам та пулнăђђё, пире вёсем айакри тă-вансем пулаççё те... Сывах çўрет пулçкеха?

В а љ к к а. Анне ман кăçал Çимёк иртсем вилђё.

М а р к к и п и ђ ђ е. Вилнё тен? Ак тамаша, пуçласа илтетёп. Хаљ те ђип-ђиперех астăватăп илемлё шăмшаклă хурарах хёрарăмђђё. Мён тăвас тен, вилём çитсен вилес пулаť. Ак еп пайан утсем кётетёп, тен ыран хам та вилсе выртăп.

В а љ к к а. О, хаљ ес вилмелле марха, Маркки пиђђе, çаплађђё пулас санăн йату. Сантан маларах епёр вилсе выртăпăр ак пёрер çакăн пек улăхра, йе вăрманта.

М а р к к и п и ђ ђ е. Вилёмне пёлес çук таха, çапах сирён пек çамрăксем вилни аплах мар. Ак хаљ нумай пулмасť, пёр уйăх çитрёши, ман пёртен пёр ывăл вăрçăра вилђё те... Мён тăвас тен? Хăй те пёрте хам пек марђђё: ăслă, хастарђђё... ха-старрипех пётрё пуљ çав! Çынна калани хай аван мар таха, çапах сире каланăшăн нимёнех те пулмё. Тен калани усăллă та пулё. Ман ывăл ырă вилём-пе вилеймен. Йулташёсем калаççё: ăна тата унпа пёрле вунă ађана хăйсене шăтăк ђавтарса, çав шă-тăк умёнђе персе вёлерне, теççё.

В а љ к к а. Мёншён апла?

М а р к к и п и ђ ђ е. Ăна калама та аванах мар... Ёлёк, Йаппун вăрçи ђухне, йалсенђе пăлхана пуçлаңăђђёçкеха. Сирён йалта та сутентсăсем ун ђухне çёмёрёлђёç. Каласса та епё, хай, аçуна ла-йăх пёлнёрен çех калатăп. Ес илтнё пуљ, санăн аçу та ун ђухне кăщт анђах тёрмерен хăтăлђёçке...

Ђылайёшё тёрмене кайса пăшал кўпђекки те çирёç. Хама епё ун пек-кун пек теме пултараймастăп та, ывăла ун çинђен нумай каласа кăтартнă. Хам епё хут та пёлместёп. Анђах ывăл Шёнер-пуçёнђе вёренсе тухрё, хёрлё питлё тăрăхла кёнекесем те тăпрас çинђе тупкаласа вулаŤђё. Кёнекисене хамах, ёлёк сирён йал Микула пиђђесем килсе пăрахсан пытарнăђђё те... Мана вёсем телей кўмерёç, ывăл пуçне çех çирёç (*йёрет*). Хаљ ав кётў кётсе çўретёп! Ех-хе-хе (*ђёлём ђёртет*). Çапах епё пит хуйхăрмастăп: хырăм тутă пултăр та, ђёлхе пуплетёр. Вара мана урăх нимён те кирлё мар. Пёђђен пурăнма пăртак киђемлерех те, мён тăвас тенха.

Л и с у к. Сан хёр ађапăђасем пур пуљ?

М а р к к и п и ђ ђ е. Ей, хёрём, çук çав... Амăш те çук, йашки-çăкăрне те хамăннах пёçерес пулаŤ... Ывăла авлантарас теттём, шăпи тухмарё веç...

Л и с у к. Сана апла пит хён пуљçке?

М а р к к и п и ђ ђ е. Хёнтерех те, ним тума та...

В а љ к к а. Маркки пиђђе! Сан сăмахсене илтсен ман тата ытларах вăрçа кайас килђё. Малалли пурăнăçа илемлетсе, етем куççулне пётересси вăрçăра! Нимёç, Йаппун вăрçинђе мар, тăшман вăрçинђе! Сан ывăл пек вилес пулсан, епё вилёме те савăнса кётсе илёттём. Çён самана тăвасси ик-виç çынтан килмест, халăхран килет. Санăн ывăлу вилнё пулсан, ун вырăнне епёр пур!

М а р к к и п и ђ ђ е. Ађам, хаљ еп сана пăхатăп та, хам ывăла курнă пекех туйăнаŤ... Ывăлăм, асту: ёçе тытăниђђен виçсе пăхас пулаŤ, унсăрăн

кайран пăшăрханмалла пулĕ (*айăккинелле пăхса*). Ой, ой! Ну! Ăçта унта капан патнелле пыратăн? Ей, çав Венук лашипе: йалан утă капанне ватаť, ай пулаť кам путсĕр выђăхĕ (*хыпаланса тухса кайаť, ђăпăркка сасси илтĕнет*).

Лисук. Пит тĕлĕнмелле çынçке ку! Хăйне пăхсан нимĕн те мар, сăмаххисем хăрушла.

Вађкка. Ак, Лисук! Хаљ пирĕнпе пупленĕ çын Ђĕнкасси кĕтўçĕ мар, вăл телейсĕр ђухăн çыннăн сасси. Ун ывăлĕ патшалăх йĕркине хирĕç тăнăшăн вилнĕ. Мĕншĕн хирĕç тăнă? Мĕншĕн тесен хаљхи йĕрке ђухăна асапран пуçне урăх нимĕн те кўмест. (*Урăх сасра*). Ей, мĕн тума калатăп çак еп сана ку сăмахсене, ес вĕсене ăнланас çук.

Лисук. Ваљкка! Еп пуйан çын хĕрĕ, анђах шухăш манăн урăхла... хаљ Маркки пиђђе йумахласа ларнă ђух ман куççулĕ шĕпĕртетсе йухасси те инçе марђђĕ... Ђăнах, мĕн ђухлĕ çавăн пек телейсĕр çын тĕнђере.... Ах, мĕншĕн епĕ çав Маркки пиђђе хĕрĕ пулманши? Еп ăна хаљ пулăшăттăм, сана пайан иккĕн йĕре-йĕре ăсататтăмăр... Хаљ епĕ, сансăр пуçне, телейсĕрскер, йал мăшкăлĕ çех пулса йулатăп (*йĕрет*). Ваљкка, пĕр уйăрăлсан есĕ мана манатăн, анђах епĕ ĕнтĕ пулса иртнĕ ĕç хыççăн, йăвăç тăпри айне пулиђђен санăн йатна манмастăп... (*йĕрет*).

Ваљкка. Лисук! Ан хурлан... иртнине ман тапратас килмест. Анђах епĕ сана, пуçа пулĕ пырса шăтармасан, манас çук! Лисук!.. Ес хуна: мĕншĕн Маркки пиђђе хĕрĕ марши? тетĕн. Аппуна

ђăрмантариђђен, пурăн, ђăнах та, Маркки пиђђе патĕнђе. Аппун хăйĕн те йыш пысăк. Маркки пиђђе пĕђђенех, ăна пулăшакан та никам ҫук. Епĕ киле тавăрăниђђен сана тăранса пурăнма хушпу тенки те ҫителĕклĕ.

Л и с у к. Ах, Ваљкка!... Еп ăна савăнса пулăшăттăм. Анђах вăл мана хăй патне илĕши?

В а љ к к а. Тен илĕ... Тен епĕ те ырă сывах ҫавăрăнса килĕп. Шăллăмпа йăмăксене пăхакан хаљ килте урăх амăш пур, атте пĕђђен мар, вĕсемшĕн куљанмастăп. Тепĕр хут телей килсен, тен епĕр тĕ пĕрле пулăпăр...

Л и с у к. Пĕрле пулăпăрши вара, Ваљкка?... Ах, уйăрăлас килместҫке!... (*Ваљкка кăкăрĕ ҫине выртса йĕрет. Ваљкка шухăша ӳксе, ăна атљашлат*).

### 7-мĕш курăнни.

*Ерхипе Мурсай кĕреҫҫĕ... Мурсай алла михĕ тытнă. Ерхип пăшал кӳптљекĕпе Ваљккана ҫапма хатĕрленет.*

Е р х и п (*шăппăн*). Пирĕн ку ĕҫе ҫынсем ҫук ђух пĕр сасăсăр тăвас пулаť. Ес лешне кăшкăрма ан пар, михĕпе хупла та, урапа ҫине ҫынсем курман ђухне йăтса кай! А Кутемер шуйттанне мĕн тумаллине хам пĕлетĕп... Ну, ут малалла! (*Шăпп патне ҫитерехпе Мурсай атљхулатса йарат. Ваљккапа Лисук ăна илтсе сиксе тăраҫҫĕ. Ерхип пĕтĕм ҫиллипе*). А! Шуйттан ҫӳри! Вĕсем майлă пулас терĕне? Йăтта йăтă вилĕмĕ! (*Ваљккана ҫапас вы-*

*ҫӑнне Мурсайа пӗтӗм вӑйӗпе пӑшал кӳпҭекӗпе парат. Леш антраса кайса ӳкет).*

Л и с у к. Ерхип! Мӗн турӑн есӗ?

Е р х и п. Ха-ха-ха! Мӗн турӑн? Вӗлертӗм!.. Санран ыйтмарӑм.

В а љ к к а. Ей! Мӗн шырама килнӗ ес кунта?

Е р х и п. Мӗн шырама? Сана вӗлерме! Хӑтӑлтӑм терӗн пуљ? Ҫук! Тикка Ерхипне сӑтӑр туса хӑварас терӗне? Йӑнӑшрӑн! Сан йыш ҫурме айнех пулмӑпӑр! Ей, Лисук! Тӳрруна хӗрхенетӗн пулсан, каҫ ку йенне! Йе иксӗре те вӗлеретӗп! (*пӑшалне тытат*).

В а љ к к а (*вуљвер кӑларса*). Ха-ха-ха! Пит ђас вӗлересшӗн! Ҫынна вӗлересси саншӑн выљӑх пусассипе пӗрех пулмалла та, анђах кунта куђђенеҫӗвех пур. Перес пулсан, иксӗмӗр те харӑс перер!

Е р х и п. А-а!.. Йурат астунӑ ӑна ђиксе тухма! (*Айӑкрӑн салтак аҭисем ҫывӑхарсӑ килеҫҫӗ*).

В а љ к к а. Ав, илтетӗн: выртма ађисем вӑйӑран таврӑнаҫҫӗ. Хуна хӗнеттерес килмест пулсан, лашуна ҫавӑр та, вӗҫтер хӑвӑртрах! Хӑвӑн йӑттуна та пӗрлех вырттарса кай.

Е р х и п. Ну, йурӗ! Хаљ май килмерӗ пулсан, хӑҫан та пулсан майлаштарӑпӑр (*кайма ҫаврӑнат*).

В а љ к к а. Унта курӑпӑрҫке, кама ҫам майлаштарӗха!

Е р х и п (*пӑртык кайсан калла ҫавӑрӑнсӑ йӑлтах урӑх саспа*). Лисук, йулашки хут ыйтатӑп: аҫусем ђӗнсен те кайалла пымӑни?

Л и с у к. Пымастӑп!

Е р х и п. Анђах Кутемере хаљ кайас çук вĕт есĕ?

Л и с у к. Кирек ăçта кайам, анђах киле ура йарса пусмастăп.

Е р х и п. Лисук! Есĕ ĕнтĕ мана тем каласа та ĕненес çук! Анђах ђăн калатăп: сана епĕ йурататтăм.

В а љ к к а. Калама çук аван йурататтăн: карланки айĕнђе пăшал тытсах тăраттăн.

Е р х и п. Ваљкка, пайантан урăх ман санпа тек вăрçас килмест. Пăшалне ђăнахах тытмалла пулнă пулсан, уншăн епĕ çех мар, есĕ те айăплă. Есĕ манран Лисука уйăрман пулсан, çак ĕç пулас çукђĕ. Анђах кирек мĕн пулнă пултăр, епĕ пайантан малалла сире парăнатăп. Ĕненместĕр пулсан — акă (*пăшалне айаккинелле ывăтат*). Йулашкинђен хут ал парса татăлар (*патне пырса аллине тăсат, Ваљкка пăшалне кĕсйине ђикет*).

В а љ к к а. Ерхип! Каçарасса епĕ каçаратăп, анђах ал памастăп. Мĕншĕн тесен, ђухăн ђухăна çеç ал пама пултарать.

Е р х и п (*çав вăхăтра Ваљккана мăйран йавса илет. Мурсай, тăна кĕрсе, пуçне хăпартса пăхат*). А-а! Ал памастăн? Епĕ те памастăп.

Л и с у к. А! а! Пулăшăр!.. Маркки пиђђе!.. (*Маркки питђђессене ђĕнме ђупат. Мурсай упаленсе пырса Ерхипе йĕвенпе туртса ӳкерет. Çав вăхăтра Маркки питђђепе Лисук кĕреççĕ*).

### 8-мĕш курăнни.

*Маркки питђђепе Лисук, кайарах салтак атђисем кĕреççĕ.*

М а р к к и п и ђ ђ е. Мĕн пулнă кунта?.. (*Ерхипе паллаcа*). Тикка Ерхипĕ! Ес мĕн шыраса çӳретĕн

кунта? Лартса пуйнипе çитмен, çынна вĕлерсе пăхас терĕне?

Ваљкка. Пĕлетпĕр епĕр сирĕн йышшине мĕнле ал памаллине.

Маркки пиђђе. А! Ес кам тата? Сана пĕлтĕр лаша вăррипе тытса хĕненĕђђĕ мари? Хаљ мĕнлеха çыхма пулăшатăн. (*Аљапăтљасем йурласа кĕреççĕ те, сасартăк тљарăнаççĕ*).

Мурсай. Тĕрĕс! Еп тĕп вăррин йатти пулнă. Мĕншĕн тесен вăл мана уншăн çигернĕ, ĕçтернĕ. Анђах пайан вăл ман алăра! Йатта вăрçтарма йурамасть: вăл урса кайма пултарать! Çаплаи, Ерхип Тиххăнђ? Ха-ха-ха! Çапса вĕлертĕм, терĕн пуљ? Çук! Тăнлав йунланнă пулсан та, епĕ сывлатăпха!

Арттеми (*малалла пăхса*). Йулташсем! Йулашкинђен хĕрлĕ куђђенеç парса хăварас мари ку укçа хуртне?

Трапхин. Ађасем! Мĕн пăхса тăрас? Вĕтес ăна! (*Пурте тљупса пыраççĕ*).

Маркки пиђђе. Мĕн усси пур ăна хĕнесе? Вăл сире уншăн укçа парасси пури? Шыва кайса йарăр!

Ваљкка. Мĕн тумалла унпа, лайăхрах çыхас та, лаши çине лартса йарас.

Арттеми (*пăшала курса*). Пăшалпах килнĕçке вăл кунта. Атăр пĕр мăшкăл туса йарар. Трапхин, тытха аллисене. Еп çурăмĕ хыçне пăшал çыхам... (*аллисене тăлласа, пăшалне çурăм хыçне çыхса, йĕвенне уринтљен çаклатса Ерхипе сĕтĕрсе кайаççĕ. Пурте кулаççĕ*).

Мурсай (*стена хыҫҫӗнтӗ*). Ей, хуҫа, тӗреклӗрех лар, трантас ҫинҗен ӳке ан пар... Ну-у! Ей-на! Лашине ҫапсах йарас пуљ... Ей, ђупасшӑн мар тата!... Ха-ха-ха! (*Пурте кулса хыҫалтан пӑхаҫҫӗ*).

Ерхип (*лаши тапранса кайсан кӑшкӑрать*). Тавтапуҫ сире лаша ҫине хисеплесе лартса йанӑшӑн. Ман лаша сирӗнђен ӑслӑрах. Килтен урӑх ниҫта та илсе кайас ҫук!.. Санпа, Мурсай, тӗл пулӑпӑрха. Пуҫран ҫапнипех пӑшал кӳпђекки пӗтменха, тарӗ те ҫителӗклӗ! Ха-ха-ха! Тен ыранах ман тӗле пулӑн.

Мурсай. А-а! Ес тата лӑпланмани? Апла пулсан, санпа тек калаҫмӑпӑр! Хӑвӑн пӑшалу хунах пемесен йурать!

Ваљкка (*стена ҫинтӗ сӑнаса пӑрать*). Вӑл ђупрӗ хыҫалтан, ҫитес ҫук! Ерхип лашине хӑвалать...

Ерхип. А-а! Ес хӑвалама шухӑшлатӑн?.. Ҫитеймӗн! Ес ҫитнӗ ҫӗре ман пӑшал авӑрлансах тӑрать!

Мурсай. Ҫитеймесен—сан телей, ҫитсен—сан вилӗм!

Ваљкка. Лешӗн лаши хытӑ кайнӑҫемӗн хытӑ кайать, Мурсай ҫитес ҫук!

Маркки пиђђе (*кулса*). Ҫитет, иртсе те кайать! Кайри урописен пӑтисем кунтах ӳксе йулнӑҫкеха; мӗн тӑвас тен. (*Кӑтартса кулать, пурте кулаҫҫӗ*).

Арттеми. Ха-ха-ха! Ну, и Маркки пиђђе! Никама та каламан, хӑйӗн ӗҫне тунӑ!

Маркки пиђђе. Еп туман ӑна. Мурсай хӑй кӑларса пӑрахрӗ. Кайран кулӑ пултӑр тесе, никама та калама хушмарӗ... Лашапа ђипер кайакан ҫынна ҫурран ҫын йепле хӑвалатӑр?

ВаҌкка (*пĕрех май сăнаса*). Мĕн пулҌĕ? Лайăх палăрмасҭ. Лаши Ҍупма ҌарăнҌĕ... А!.. А!.. Мурсай çитесси айакра мар... Леш ура çине тăнă! ХаҌ çитет! Çитет!.. Мурсай маттур!.. Çитрĕ!..

Арттеми. А!.. Леш тăраҭ!.. Ура тăллисене татнă, еппин аллисене вĕçертет!

ВаҌкка. Мурсай ырнă... йула пуçларĕ! . А!!. (*Пăшал сасси илтĕнет*). Ӳкрĕ!..

Арттеми. Йулташсем, аҭăр хăвалар!.. ВаҌкка, пăшална тыт!..

Пурте (*кайма хатĕрленсе кăшкăраççĕ*). Аҭăр!.. Айтăр!

ВаҌкка. Ҍимĕр! Лашине тăварҌĕ... тараҭ! УтланҌĕ!.. Çитес çук!..

Пурте. Çитетпĕр, тытăр лашасене!

ВаҌкка. Çук! Çитес çук! Курăнми пулҌĕ!

Маркки пиҌҌе. Тикка лаши таврара пĕрре, есĕр ăна çитес çук, ан та тапăлтатăр!

Арттеми. Еппин çапах кайса пăхар... Мурсайа ăçтан персе вĕлернĕ! (*Пурте кайаççĕ*).

Лисук (*ВаҌккана тҌарса*). ВаҌкка, ан кай, еп хăратăп! Сасартăк кунта килсе тухсан, ăçта кайса кĕрес!..

Маркки пиҌҌе. Ывăлăм, мĕн тумалла пурте кайса, вĕсем кайсан та çитет, хĕрхенсем хĕрупраçа.

**9-мĕш курăнни.**

*ВаҌкка, Лисук, Маркки питҌе.*

Маркки пиҌҌе. Çур ĕмĕр пурăнса иртерттĕм, кун пек çамрăксем пăшалсемпе çапăçнине курманҌҌĕ. Урăх курмалла ан пултăрах.

Ваҫкка. Курмалли, Маркки пиҫҫе, малалла... Ҫитменха...

Маркки пиҫҫе. Пĕлме ҫук, тем те курса вилмелле пулĕ *(ҫĕлĕм ҫĕртет)*.

Ваҫкка. Лисук, епĕр паҫăр тапратнăҫҫĕ, анҫах пĕтерейммерĕмĕр. Хаҫ, Маркки пиҫҫе пур ҫухне, каласа пăхари?

Лисук. Йурĕ...

Маркки пиҫҫе. Мĕн тата апла?

Лисук. Маркки пиҫҫе, еп сан хĕр пуласшăн, ху патна пулăшма илетни мана?

Маркки пиҫҫе. Ей, мĕн калатăн есĕ? Ман пӳрте сана кĕме те намăс... пырсан тухса кайас тейĕн... Пӳрҫĕ те ĕнтĕ хампа пĕрлех тӳнсе кайаҫ пуҫ теха... Пĕртен пĕр кантăккине те ҫĕтĕк таткисемпе ҫех саплакалатăп...

Лисук. Апла пулсан, мана сан патăнта тата авантарах... ман хаҫ шур пӳртре пурăнас килмест.

Ваҫкка. Маркки пиҫҫе! Ес хирĕҫ пулмасан, вăл сана йашкаҫăкăр пĕҫерсе парĕ, ес ху кĕтӳ кĕтнĕ ҫух ҫăхҫĕпсене пăхĕ.

Маркки пиҫҫе. Ун пек ĕҫлеттерсе ҫын усрама еп, ывăлăм, улпут мар вĕт. Ман килте хĕрарăм ҫуккишĕн есĕр айăплă марҫке.

Лисук *(ҫĕркуҫленсе, аллисене Маркки пиҫҫе ҫĕркуҫҫи ҫине хурса)*. Апла пулсан, Маркки пиҫҫе, еп сана ҫĕркуҫленсе тилмĕретĕп. Усра мана ху патăнта, хама пурăнмалăх манăн хушпу тенкисем пур.

Маркки пиђђе. Хёрём, апла каласа ес мана хурлантаран. Усрас килменнипе мар, сантан вăтанса епĕ çапла каларăм. Сан пек хĕре кам ус-расшăн пулмĕ?...

Лисук. Еппин ес мана ху патна илетĕн, Марк-ки пиђђе? Еп санăн хĕрађу пулатăп, Ваљкка санăн ывăлу...

Ваљкка. Ну, Маркки пиђђе, тепле куншăн тавтумалла ĕнтĕ ман сана. Хаљ манăн нимĕн те çук, тен салтакран таврăнсан тивĕçлине тӳлĕп.

Маркки пиђђе. Ман хамăн сире тавту-малла. Кĕтмен çĕртен телей килђĕ, ĕнтĕ пурăнма та хавас пулаť. (*Кăшт тăрсан*). Анђах ăçтан ку шухăш сирĕн пуçа килсе кĕнĕха? Каçарăр мана, тен ыйтмалла та марђђĕ пулĕ... Еп сире иксĕре курса-нах шухăшларăм: кусем пĕр-пĕрине уйăрăлмалла мар йуратаççĕ пуљ, терĕм. Анђах ыйтса пĕлмерĕм... Хĕрĕ хăш йалши? тесе те ыйтмарăн... (*Лерен килекен ађапăђасен сасси илтĕнет, Мурсай ахлатаť*).

Ваљкка. Маркки пиђђе! Лисук—манăн савни. Тикка Ерхипĕ—ман тăшман. Урăх каласси те кирлĕ мар. Есĕ пире хĕрхенетĕн пулсан—ыйтнине хирĕç ан пыр. Пирĕн пайан уйăрлас пулаť. Уйăрăлсан, Лисука пусмăрлакан та пулĕ. Çавăнпа, Маркки пиђђе, сана тилмĕрсе калатăп: вăй çитнĕ таран пулăш Лисука, усал çынсенђен сыхла. Никама та—ăшшĕамĕш пырса тухсан та—ăна есĕ ан парса йар! Тӳрех кала: Ваљкка салтак хушмарĕ, те. Мĕншĕнне Лисук каласа парĕ кайран та.

Маркки пиђђе. Савăннипе... хама çакăн пек ăслă ађасем хисепленипе... манăн... куççуљ те çĕре

тăмланђĕ... Ывăлăм, хĕрĕм! Сирĕн телей ђăнахах манран килес пулсан, епĕ ватă пуçăма та хĕрхенмĕттĕм... Сирĕн телейе курса, савăнса вилесђĕ (*йĕрет*).

В а љ к к а. Айлатни илтĕнет мари? (*Тăраççĕ*).

Л и с у к. Мурсай вилмен, ăна çавăтса килеççĕ.

М а р к к и п и ђ ђ е. Çырни çитмесĕр çын вилмест, теççĕ.

## 10-мĕш курăнни.

*Ађапăтђасем килеççĕ. Мурсайа çавăтса кĕреççĕ. Ун кĕписем пĕтĕмпе йунланса пĕтнĕ, йеринен айлатать.*

Л и с у к. Мурсай, сана пăшалпа пенĕ!

М у р с а й (*аран кăшкăрса*). Пенĕ!.. Анђах!.. анђах вĕлерейме!.. Салтак ађисенђен каçару ыйтса, вĕсене ăсатма, мана пăшал хăварнă.

В а љ к к а. Вырттарăр ăна ăшă çĕре! Ăна кансĕр пуљ ларма... Аçам сарас çерем çине, ак кунта вут патнерех.

М у р с а й. Çук! Еп выртмастăп: манăн, ларса та пулин, сире ăсатас килет. Салтаксем вăрçăра ирĕксĕр вилеççĕ, епĕ хам ирĕкпе, хам вилетĕп! Еп вăрă пулнă, тĕп вăррин йытти пулнă! Мана ниçта та тытса вĕлерейме!.. Анђах пайан хам хуçа пиллесе пађĕ... Тавтапуç ăна! Çаплах пурăннă пулсан, пурте вăрă тетђĕç. Хаљ мана никам та вăрă теме пултараймасť... Еп вăрă мар... вăрă м-м-ар! (*кăшкăрса антраса кайать, ăна тытаççĕ, вырттараççĕ*).

В а љ к к а. Вырттарăр çавна, пăртак лăплантăр.

М у р с а й (*пăртак тăрсан*). Тăратăр мана!.. Тăратăр!.. Мана выртма йурамаст!.. Ман салтак ађисене ăсатас пулат!.. Йун тымарёсем пушанаççё!.. Сывлăш пётет! Йурлăр!.. Тархаслатăп, йурлăр!.. Ман йурлас килет, хаљ йурламасан, ман сывлăш пётет... Вилиђђен салтак йурри йурласа курас...

М а р к к и п и ђ ђ е. Мурсай, канха ес пăртак, вăй кётёр, вара йурлăн...

М у р с а й. Çук!.. Кётме йурамаст.. Ав куратăр!.. Хёвелтухăç йенђен пёлёт хёрелсе улăхат!.. Вăл еп вилессе пёлтерет!.. Хёвел тухнă çёре ман ђун тухат!.. Йурлăр, ма йурламастăр?.. Вăрăна йурлани килёшмест тетёре?.. Еп вăрă мар!.. Еп—мёскён Мурсай!.. Йурламастăр?.. А?.. Еппин еп пёђђен йурласа вилем.. (*аран йурлат*).

В а љ к к а. Михаља, пирён каймалли те вăхăђё иртет. Йурлар Мурсайа хёрхенсе: вăл пирёнтен те телейсёр! (*Михаља купăс пуçлат, пурте йерипен салтак йурри йурлаççё, Лисук йёрет*).

М у р с а й. Тутăрпа сулласа йурлăр!.. Епё те сирённех кайатăп. Анђах тăрса сикейместёп... Парăр мана та алшăлли!.. Епё те сулласа йурлам!.. (*Алшăлли параççё. Мурсай, тăрса, сулласа йурлас тет те, вилёмё çитнипе ўкет*). А! Еп сирённех пыратăп... пыратăп!.. Маркки пиђђе... Лисук, Ваљкка! Каçарăр!.. Салтак ађисем!.. Ан манăр: еп вăрă мар! вăрă мар!.. вăрă м-мар! (*Вилет, йурлама ђарăнаççё*).

Л и с у к (*ун патёнђе ђёркуçланса*). Ех, телейсёрскер!..

Маркки пиђђе (*аллисене, урисене тӳрлетет, куçĕсене хупат*). Çырни çитрĕ. (*Ђылайтђен пăхса тăраççĕ. Хĕвелтухăç йентђен хĕрлĕ çутă ӳкет*).

Арттеми. Вађкка! Кайар ĕнтĕ... Тул çутăла пуçларĕ... Прахута çитейменĕпĕр!..

Вађкка. Кайар... Маркки пиђђе, сывă пул! Лисука сана шанса хăваратăп...

Маркки пиђђе. Ан куђђан, çырсах тăр... Ну, ђипер çавăрăнса килмелле пултăр (*тђуптăваççĕ*).

Вађкка (*Лисука*). Лисук! Уйăрăлас килмесен те, уйăрăлас пулат... Килти хыпарсене çырсах тăр... Хађ нумай калаçмăпăр... Сывă пул... Тен хăçан та пулсан каллех тĕл пулăпăр... Тен пулмăпăр та. (*Йĕре, йĕре ыталанаççĕ. Ыттисем Маркки питђипе, выртма атђисемпе сывпуланаççĕ*).

Лисук. Вађкка!.. (*йĕрет*). Ĕмĕрлĕхех уйăрлтăмăрши? Ан ман пире, ђасђасах çыру йар (*йĕрет*).

Вађкка. А!.. астуман та... Лисук, ме ку куђђенеçе, çумрах усра, çынна ан кăтарт. Ăçтан пĕлен, тен, лешне тĕл пулăн... (*пăшалне парат*). Ну, йулташсем, пуçлăр тепĕр хут йурра. Мурсай кайрĕ, пирĕн те кайас пулат... Ех, Мурсай! Ыттисене, телей пулсан, тен курăпăр, сана курас çук тек... Сывă пул!

(*Сиксе йурласа, алшăллисемпе сулласа, тухса кайаççĕ. Лисук, Маркки питђе кăкри çине тайанса, йĕрсе йулат. Леш йăпатса каска çине çавăтса кайса лартат*).

Маркки пиђђе (*пĕр сăмахсăр хăй аçамне хуса, вилле витет: пуçĕ çине ирхи хĕвел çутти ӳкет; ђаршав йерипен хупăнат*).

*Ђаршав.*

## 2-мĕш карттин.

*Теккаратси çавах. Хĕрсем, хусахсем пухăннă, йурлаççĕ. Хуралла выђаççĕ. Маркки пиђђе вут патĕнђе ђĕлĕм туртса ларат, ун патĕнђе ватăраххисем. Хыçалта уйăх çути.*

### 1-мĕш курăнни.

*Маркки пиђђе, Кçеђук, Трапхин, ађапăђасем.*

Кçеђук (*Маркки пиђђе патне пырат*). Маркки пиђђе, мĕншĕн есĕ Лисука нихăçан та вăйа кăлармастăн?

Маркки пиђђе. Епĕ ђармастăп ăна, хăй ниçта та тухасшăн мар, пĕрмай килте ларат. Ађи те кунтан ăсатса йанăранпа пĕр çыру та йамасť те, куђанаť пулас.

Трапхин. Кайнăранпа пĕрре те çырмани?

Маркки пиђђе. Пĕр хут татки те илмен, пĕр хыпар та çук. Ĕнтĕ кайни тăвата ерне çине кайрĕ, ку таранђђен хыпар çитмелле те...

Кçеђук. Вырăнне çитеймен пуђ, çавăнпа çырмаççĕ.

Маркки пиђђе. Ку таранђђен вырăнаçмалла та ĕнтĕ...

Трапхин. Маркки пиђђе, есĕ илтнĕ-и: леш Тикка Ерхипĕ, тытса хупасран хăраса, Çĕпĕре тарнă, теççĕ.

Маркки пиђђе. Çĕпĕре?.. Ара, Çĕпĕре йанă пуљ ăна, тытса хупнă, тетђĕççке...

Трапхин. Çу-ук, ăçтан тытан ăна... тытиђђен тарнă тет вăл.

Маркки пиђђе. Ну и пулаŏ çак çын та... ђĕресĕр, ђунсăр кашкăр пек. Апла кайнă пулсан, Лисука та çăмăлтарах, хам та хăраса—хаљ килсе тухаŏ—тесе çех тăраттăм, йалан тата аван мар тĕлĕк куратăп. Пайан та тĕлĕкре епĕ çĕн пўрт лартса. Хвеŏук Ваљккипе Лисук туйне кĕртрĕм пек... Ырлăха мар пулĕха ку тĕлĕк. Тен çав çыру илменни те ахалех мар пулĕ. Çитнĕ-çитмен вилсе выртманши пирĕн çамрăксем... Тем те илтсе курса вилмелле пулĕха.

Кçеђук. Маркки пиђђе, апла пурте вилсе пĕтмен пуљ те ха, хăшĕ те пулсан йулнах...

Маркки пиђђе. Пĕлме çук!..

## 2-мĕш курăнни.

*Çавсемех, тата Мирун. аŋапăŋасем ун тавра пухăнаççĕ.*

Мирун (*ŋупса кĕрет*). Маркки пиђђе!. Михаља пиђђесен Ваŋукки вăрçăран аманса килнĕ, хаљ çех саттунран çитрĕ. Кутемер ађисене курнă, тет, Лисукпа сана салам каласа йађĕç, тет... Лисук ваљљи çыру та пур, терĕ. Хаљ вăл Лисук патне çыру пама карĕ. Унтан, тен, кунта та килĕп, терĕ... (*Аŋапăŋасем ун йĕритавра пуçтарăнаççĕ*).

Маркки пиђђе. Ђăнахи? Ак Лисука савăнăç! Хаљ анђах çырмаççĕ, тесе каласа ларатăмăр,

еппин çыру та йанă (*хавăсланса*). Ну, ку хыпара килсе пĕлтернĕшĕн темпе тавтăвас сана, Мирун.

Т р а п х и н. Хĕр тупса парас та, авлантарас ăна, Маркки пиђђе (*кулаççĕ*).

М и р у н. Хам тупаймастăпи мĕн епĕ?

М а р к к и п и ђ ђ е. Мирун аптрамĕçке вăл. Унăн хаљ Мавра та вăтăра çитмен (*пурте кулаççĕ*).

М и р у н. Маркки пиђђе, Мавра патне Трапхин хăй çӳрет вăл, епĕ мар!

М а р к к и п и ђ ђ е. Ак йапала? Апла Трапхин тытса илђĕи сантан.

Т р а п х и н. Хаљ вăл, Маркки пиђђе, Укаçа килĕштернĕ, Мавра ватă тет...

М а р к к и п и ђ ђ е. Ак тата, хĕре пăрахса, тăлăх салтак матки патне ђупа пуçларăнаха ес, Мирун? Килне кайса кĕрес теместĕни?

М и р у н. Маркки пиђђе, есĕ кулми пулнăђђĕçке çак. Пайан каллех мăшкăлама пуçларăна? Кунта мана, пĕркунхи пек, шыва йаманçке?

М а р к к и п и ђ ђ е. Шыва йарсан кулаççĕи? Вара макăрас пулаť.

Т р а п х и н. Маркки пиђђе, унăн хаљ пĕркунхи те типмен.

М а р к к и п и ђ ђ е. Типнĕ пуљ! Унтанпа Маврапа Укаçран хăшĕ те пулсан çуса типĕтсе панă пуљ (*кулаççĕ*).

М и р у н. Кулакана кутне çыпăçаť тет ха...

М а р к к и п и ђ ђ е. Темĕн, ырлăха мар пуљ, тепĕр ђух таçталла пăрăнса кайаť ман ђĕлхе... (*Сасартăк*). Ей, мĕнле хăйаматла лаша вара çав,

каллех утă капанне ватма пынă... Çав Ваӊук лашийех çисе йарат ĕнтĕ пĕр капан утта. (*Кăшкăраша чăвалама кайат, ӆăпăрккапа шартлаттарат*).

Т р а п х и н. Хĕрсем, мĕн пăхса тăратăр: тавай ташлаттарас Мируна! Мирун, ташлаттар пĕрне, тыт! (*Купăс каласа Мируна пĕр хĕрпе ташлаттараççĕ, ун хыççăн тата хĕрсене хулăпа хĕнесе ташлаттараççĕ*).

**3-мĕш курăнни.**

*Çавсемех, тата Лисук кĕрет. Ăна курса, ташлама пăрахаççĕ, пурте ӆупса пыраççĕ.*

С а с ă с е м. Лисук килет, Лисук килет!

К ç е ӊ у к. Лисук, ма есĕ пĕртте ваййа тухмастăн вара?

Т р а п х и н. Лисук! Пайан савнинђен çыру илнĕ шутпа выљама та йурат.

Л и с у к. Маркки пиђђе ăçта вара?

К ç е ӊ у к. Лашасем утă капанне вата пуçланă та, унта ђупрĕ. Есĕ Ваљккаран çыру илнĕ теççĕ мари?

Л и с у к. Илтĕм, анђах Ваљккаран мар, ун йулташĕнђен... (*Çыруне тытса*). Ех, Кçеӊук, мĕншĕн манăн пĕр телей те çукши? (*Кăвар патне кайса ларат*).

К ç е ӊ у к. Усал хыпар илтĕне мĕн, Лисук?

Л и с у к. Ытла усал та мар, ыррийех те мар.

## 4-мĕш курăнни.

*Çавсемех тата Маркки пиђђе.*

Маркки пиђђе. И-и, Лисук та кунта килнĕçке! Ну, ађисем, мĕн есĕр ташлама пăрахрăр, ташлăр. Йе выљаса пăхас тетре? Мируна хуралăç тăвăрха, пĕрер ђипертереххине тытайраŷи? Хе-хе-хе!

Трапхин. Лисук темшĕн выљасшăн мар Апла пĕри выљасан, тепри выљамасан вăйă илемĕ те çук!

Маркки пиђђе. Лисук выљамасŷ?... Выљаŷ, хăвăр пуçласа памастăр та. .

Лисук. Çук, Маркки пиђђе, выљамастăп. Кунта епĕ выљама мар, санпа калаçса çĕре кĕскетме килтĕм...

Маркки пиђђе. Апла пулсан ирĕксĕр выљаттарас мар... Еп хам вăйă-кулă таврашне пиг йурататăп та, çавăнпа выљљаттарас килет...

Трапхин. Ађасем, каймалла та пулĕ пирĕн Выртма килнисене кансĕрлетпĕр, тен, çыврас теççĕ, вăхăт нумай пулнă.

Кçеђук. Ђăнах, хĕрсем, айтăр йала кайатпăр *(Мирун аллинђен çăлăнса тухса, Лисук патне кайаŷ. Мирун ĕнсине хыçса йулаŷ. Пурте кулаççĕ)*. Лисук, ес пыратна киле, йе йулатăн?

Лисук. Кçеђук, еп пымастăп, кунтах йулатăп.

Мирун. Апла, тек выљамасан, йурласа кайас хуŷ. Кармунне тавай икрай! *(Купăспа вăйă йуррисем йурласа кайаççĕ)*.

**5-мӗш курӑнни.**

*Иккӗн-виҫҫӗн выртма ҫыннисем кӗрсе аҫамсемпе пӗркенсе ҫывӑраҫҫӗ. Маркки пиҭҭепе Лисук вут хӗрӗнҭе йумахласа ларҫҫӗ. Айакран вӑйӑ сассисем илтӗнеҫҫӗ.*

Маркки пиҕҕе. Апла Ваҕкка хуларах выртса йулнӑи?

Лисук. Вӗсене Артгемипе иккӗшне пулемет камантине илнӗ. Прахут ҫинҕе Ваҕкка сасартӑках ҕирленӗ те, ӑна Ҕулхулара антарса хӑварнӑ... Мӗнпе ҕирленине Арттеми пӗлмест. Анҕах пиӗ йӑвӑр ҕирпе ҕирленӗ пулмалла... Арттемийе нимӗн те калаймарӗ, тет. Сывӑ пул, йулташ! Пирӗн ҫулсем уйӑрӑлҕӗҫ, ман ӗмӗте ан ман!—тесе ҫех каларӗ, тет... (*йӗрет*). Арттеми ыйтат: ҫыраҭи сан патна, еп унган пӗр ҫыру та илмен, тет... Ах, Маркки пиҕҕе! Сан тӗлӗк Ваҕкка вилессе пӗлтернӗ пуҕ!.. (*Маркки пиҭҭен ҭӗркуҫҫийӗ ҫине выртса йӗрет*).

Маркки пиҕҕе. Кирлӗ мар шухӑшпа пуҫа ан хускатха, Лисук! Ҕирлӗ ҫын ӑҫтан ҕас тӳрлентӗр, тен, тухтӑрсем ҫырма хушмаҫҫӗ пулӗ?

Лисук. Ҫук, Маркки пиҕҕе! Вилнех вӑл, ҕӗрӗ пулсан пӗрик сӑмах та пулсан ҫырмалла... Маркки пиҕҕе, еп ыранах ун патне Ҕулхулана кайас тетӗн, унта кайма ман укҫа ҫитег. Пӗлетӗп, вилнине те пулин шыраса тупатӑп (*йӗрет*).

Маркки пиҕҕе. Лисук хӗрӗм, лӑплансам.. Ан кай теме пултараймастӑп. Анҕах тупайрӑнши унта ес ӑна.

Лисук. Еп вырӑсла пӗлетӗп, ҫырма-вулама пӗлетӗп—ҕӗлхепе пурне те тупма пулаҭ.

Маркки пиђђе. Ну, йурĕ. йурĕ. Саттуна çитиђђен хам та ăсагăн, унтан прахутпа ларса кайатăн.

Лисук. Ах, Маркки пиђђе, мĕншĕн епĕ çаплах телейсĕрши? (*йĕрет*).

Маркки пиђђе. Лисук, ес ытлашши ан хуйхăрха, куççулне уссăр ан пĕтер... Тен, ђиперех... сывах.. Лăпланха! Сивĕ пђ сана... Çак аçама тăхăнса лар, йе ирђђен выртса çывăр. Ирхине мĕн килет, курăпăр... Еп лашасене кайса пăхам. Çав Вађук лаши пит усал: улăхри апат çитмест ăна, йалан утă капанне ватать. Пăхса, çаврăнса килемха (*кăшкăркалаша кайать*)

## 6-мĕш курăнни.

*Лисук, Ерхип, çывăракансем.*

(*Лисук пĕтђђен, ыттисем çывăраççĕ. Лисук такçантђђен çырупе пăхса, вут умĕнђе вулаға ларать. Ерхип вăрттăн хыçалтан кĕрсе, йĕритавра пăхкалаға итлесе тăрать. Вара çывракансене пăхса тухать. Унтан Лисука, вуласа пĕтерсен, çăварне тутăр хыптарса, пăвса пăрахать те, вут патне аçампа витсе выртарать, питђĕ курăнать. Вара çырупе илсе, пирус тђĕртсе вуласа пăхать те, вут çине пăрахса, тискерĕн ахăлтатса туха кайать*)

## 7-мĕш курăнни.

*Маркки питђе кĕрет.*

Маркки пиђђе. Лисук, выртрăна?. Ђĕнмест... Шухăшласа ывăнђĕ пуђ. Айăхĕ тутлă пултăр!

(*Ђĕлĕм ђĕртсе, кăвар пăлхатса ларать*). Çывăрах, хĕрĕм, çывăрах! Ыран ăсатăп хамах. Ех-хе-хе-хе-хе (*çăварне карать*). Хамăн та йăйхă килет вĕç, пăртак тĕлĕрсе пăхсан мĕн пулĕши?...

(*Йăвăç тункати çумне тайăнса, тĕлĕрсе кайать. Катара шăпђăк йурлани илтĕнет.. Маркки пиђђе çывăрса кайсан, йерипен ђаршав хупăнать*).

*Ђаршав.*

---

Хакĕ 44 пус